Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, перлешĕр!

1938
АВГУСТ
17
ЮНКУН
189 (5002) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пер №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, ред. заместителĕн—3—67, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—3—65, ялхуçалăх пайĕн—4—67, совет строительствин пайĕн—6—58, промышленноçăн пайĕн—7—67, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Ĕççыннисен коммуналлă çуртйĕр строительствине вăйлатма ыйтаççĕ

Пирĕн Чăваш республикинчи строительства еçе çултан çул вилăн сарăлса пырать. Совет влаçĕ пулнăранпа сĕм вăрман пулнă вырăнта пысăк промышленноçлă Çĕмĕрле хули ӳссе çитĕнчĕ. Нимĕнле промышленноçăсăр пулман вырăнсенче туса лартнă Куславкка комбиначĕ тата Вăрнарти предприятисем çумĕнче посолоксем çитĕнчĕç. Канаш посолокĕ хула пулса тăчĕ. Шупашкарпа Улатăр тата ытти хуласемпе район центрĕсен сăн-сăпачĕ те палламала мар улшăнчĕ.

Халăх хуçалăхĕн кăçалхи планĕ коммуналлă-çуртйĕр строительствине нихăçанхинчен пысăкăн вăйлатма пăхать. Кăçал коммуналлă çуртйĕр строительствине 8 миллион та 775 пин тенкĕ ытла хывмала. Вăл строительствăн ĕçĕсен кăçалхи хисепĕ пĕлтĕрхинчен виçĕ хута яхăн ытларах пулнине пĕлтерет. Ку ĕнтĕ коммунистсен партийĕ тата Совет правительстви ĕççынисен материаллă пурнăçне культурлăхне çĕклесси пирки, пурăнмалли çуртсен хисепне пысăклатасси çинчен калать.

Халĕхи вăхăтра пур хуласенче те строительства ĕççе пырать. Шупашкарта Советсен çуртне тата 24 хваторлĕ çурта тăваççĕ. Куçма Карл Маркс урамне асфальт сарма тытăннă. Улатăрта тата Канашра мунчасем тăваççĕ т. ыт. те. Анчах та [illegible] коммуналлă çуртйĕр строительстви питех те йӳлса пырать. Маларахи çур çул хушшинче çуталăк планĕ 17,2 процент çеç туптарнă. Ирпĕ уйăхенче те еçе лайăхлатас ĕçнĕпе палăрмалăх улшăнусем тумăн.

Пурăнмалли çуртсем тăвас ĕçне Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ çеç мар, Вырăнти, Анат-çимĕç Халăх Комиссариачĕсем тата ытти чылай хуçалăх организацисем те начар ĕçлеççĕ. Анат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ çуртйĕрсем тума пана 59 пин тенкĕ укçаран пин тенкине çеç усă курнă. Вăрман организацисен кăçал 1713 пин тенкĕлĕх çуртсем тумалла. Ку таранччен 17,5 пин тенкĕлĕх çеç тунă. Çĕмĕрлери „Большевик" савăчĕ çуртйĕрсене тума та тытăнман-ха.

Коммуналлă-çуртйĕр строительстви йӳлса пырасси кăçал çеç мар, чылай çулсенче пулнă. Апла пуласси анăçăран килсе тухнă. Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариатĕнче, строительства организацисенче пулнă халăх тăшманĕсем, буржуаллă-националистсем чылай çулсем хушшинче ĕççынисен интересне тĕрĕмĕн тивекен [illegible] çуртйĕр строительствине [illegible]. Вĕсем Шупашкар хулине ӳсме чăрмантарнă. 1931 çулта тума тытăннă водопровода тата ытти строительствăсене çултан çула хăварса пынă.

Халăх тăшманĕсен, буржуаллă националистсен [illegible] çĕмĕрсе тăкнă. Вĕсен [illegible] ĕçсен йышăннисене пĕтерме вăхăт çитĕнлĕлĕ пулнă. Анчах Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ унăн руководителĕ пулнă, халĕ ПСК(б)П Обкомĕ партирен кăларнă, Канаш строительства организацисене çирĕпĕн йĕртсе пырăмалла, вăл хăй çатăрах ĕççи туса коммуналлă строительствăна йухăнтарса пынă. Стройтрест руководителĕ Воробьев та строительства ĕçне [illegible]. Кусенчен Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ çĕнĕ руководстви, строительства организацийĕн руководителĕсен çирĕп урок сем туса, çатăрçасем синенĕ ĕççесен йулашкисене тĕпе-йĕрĕпех пĕтерес тĕллĕне большевикла тыллăсене ĕçлеме тытăнмалла.

Халĕ строительство вĕрĕлет сурăх.

Стройка работникĕсем хушшинче ответсăрлăх хытă саралнă. Анна кирек хăш стройкă çине пăхсан та курма пулать. Акă Шупашкарти водопровода тунине илер. Ку стройкăн руководителĕсем Никулинпа Маслов йулташсем малтанçуксăр çурçул хушшинче материалсем çук тесе ĕçлемесĕр тăнă. Халĕ материалсем пур. Анчах строительствă ĕçĕ начар пырать. Мĕншĕн тесен ĕç ... вăйĕ çитмест. Ку ĕнтĕ строительствă руководителĕсем çавăрăнăçусăр ĕçлениччен килнĕ.

Хула совечĕсĕмпе чылай райсовĕтсен çуртйĕр строительствине тивĕçлĕн пăхмаççĕ. Акă Шупашкар хула совечĕн ĕççенех илер. Вăл çуртсене йусама хăйтанах çитерсе тесен çитерме. Унăн коммуналлă çуртйĕр пайĕ (пуçлăхĕ Соловьев) миçе çурт йусасси тата йусани çинчен те тĕплĕн пĕлмест. Асфальт сарасси вăрах пырать, куншерен пĕрер, икшер метр хушши çеç сараççĕ. Хула совечĕ строительствă ĕçне оперативлă йĕртсе пынă пулсан, кунашкал пулас та çук.

Хальхи вăхăтра стройкăсенче ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Ĕç вăйĕ кирлĕ таран пухма рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатни, массăллă ĕçе вăйлатни, стахановла йухăма çĕклесе пырса рабочисене стройка ĕçне интереслентерни кирлĕ. Ку пурнăçланман те паллă. Анчах хуçалăхла строительства организацисем ина тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Капла ĕçлессине халех пĕтерме тăвас пулать.

Ĕççыннисем коммуналлă çуртйĕр строительстине хăвăртрах лайăхлатма ыйтаççĕ. Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕн, унăн çĕнĕ руководстви, хуçалăх организацийĕсен, совет тата хисеплĕ задачи—ĕççынинсен ыйтнине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласси пулать. Апла тума пуринчен малтан строительствăри работникĕсем хушшинче массăллă агитаци ĕçне вăйлатса пынă никĕс çинче стахановла йухăма массăллă йухăм туса ӳстерме, дисциплинăна çирĕплетни кирлĕ. Кашни работник хăйĕн ĕççĕшĕн халăх умĕнче пысăк ответлăхра тăнине туйса ĕçлетĕр. Унсăрăн строительствăсенче çирĕп йĕрке тума çук.

Коммуналлă-çуртйĕр строительствин ĕççесĕмĕн хула совечĕсемпе райсовĕчĕсем тата предприятисемпе учреждени директорĕсем те строительствăне пĕртан ответлă çуртйĕр строительстине хăвăрлатса ĕççыннисен ӳссе пыракан пурнăçлан ыйтăвĕсене пĕсин пулать. [illegible] руководителĕсем часах хăвăрт [illegible] тытмала.

Паянхи задачă—строительствă сезонĕ пĕтиччен коммуналлă çуртйĕр строительствине планпа пропырахын туртса кăларасси. Стройкăсенчи рабочисене инженерла-техникла работникĕсен коллективĕ строительства ĕçне лайăхлатасси çинче тунă. Шупашкарти 880 вырăнла шкул тунă çĕрте Ĕçлекенĕн Угловский йулташ бригади стахановла йухăм пуçарни виççĕ çул тултарнă нормă тултарса ĕçлеме тытăннине кĕтсе илет. Кунашкал тĕслĕхсем пулать.

Рабочисен активлăхне çĕклесе пырасси—стройкă руководителĕсен, стройкăсенчи партипе профсоюз организацийĕн тивĕçĕ пулать. Строительства механизацисене усă курассине хирĕç тăракансем, дисциплинăна пăсакансене хирĕç кĕрешнĕ ĕççеппи вăйлатмалла. Строительства организацисенчи шайĕсенчен хăварма тăрăшса, стройкăсенчи организацисенчи руководителĕсене çирĕп [illegible] ĕççене массăлла [illegible] йĕрке руководительсене пĕрле хутла. Коммуналлă-çуртйĕр строительствине хăвăртрах лайăхлатма.

Ăпони промышленнăçĕнчи кризис

Китай халăхне хирĕç вăрçнă вăрăм вăрçă хайне Япони промышленнăçĕн ĕçне хăрушăлла кăçарса пырать. Вăрçă хатĕрĕсен производствине çывăхмăн прадĕл предприятисене тĕрлĕ майпа ӳксе каять. Анчах тата ытти промышленнăç производстви кăçал [illegible] не пĕтме илсе çитерет.

Вăрçă пуçланнăранпа пĕр çул хушшинче вак предприятисене 401 пулнă. Çав вăхăт хушшинче ытти 513 вак тата вăтам предприятисен хăйсен производствине хăварт [illegible] ăхăх чарса лартмалла пулнă. Хăйсене хупса лартнă пирки ĕççер тăса пулнисен ĕççи вăйăн ӳсмĕ.

Китайри вăрçă вăрăма кайнине Япони тĕсекен акăçа кĕмĕлĕ промышленнăçри сарсăри çăлтăнă промышленнăç тата кĕмĕлрен пĕрле [illegible] пĕрле виçĕ [illegible] мĕн-мĕн [illegible].

(ТАСС).

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Сессийĕ

Августăн 15-мĕшĕнче пулнă ларусен дневникĕ

Августăн 15-мĕшĕнче ирхине Союз Совечĕпе Национальноçăсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулнă. Вăл ларура ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви Положенийĕн проектне çинчен ССРС Юстици Халăх Комиссарĕн Рычков йулташăн докладне итленĕ.

Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

— ССР Союзĕн судоустройстви Положени çĕнĕ проекчĕ,—тет Рычков йулташ,—совет судне малала татах çирĕплетме, суда малала татах, шăпах Сталинла Конституци ыйтнă пек, демократизацилеме май парать.

ССР Союзĕнче правосудин задачи—çаксене тĕрлĕ майпа пăсасран сыхласси пулса тăрать:

а) ССРС Конституцийĕпе, союзлă тата автономлă республикăсен Конституцийĕсемпе çирĕплетсе хунă ССР Союзĕн общественнăй тата государстви стройне, хуçалăхăн социализмлă çыстемине тата социализмлă харпăрлăха сыхласа тăрасси;

а) ССРС гражданĕсен политикă, ĕç, пурăнмалли çуртйĕр тĕлĕшĕнчи, пурлăх тĕлĕшĕнчи тата ытти прависемпе интересĕсене, ССРС Конституцийĕ, союзлă тата автономлă республикăсен Конституцийĕ [illegible] сыхласа тăрасси;

б) Государствă учрежденисен, предприятисен, колхозсен, кооперативлă тата ытти общественнăй организацисен интересĕсене сыхласа тăрасси.

ССР Союзĕнче правосуди задачи—ССР Союзĕнчи пĕтĕм учрежденисен, должноçри çынсем тата гражданĕсен совет саккунĕсене тĕрĕс те пĕр пĕрккелăнмасăр пурнăçа кĕртсе пырассине пурнăçа кĕртесси.

Шăпах ССР Союзĕн Конституцийĕ тăрăх судоустройстви Положенийĕн проекчĕ судсене суйласа хумала, судйасем урăх никама та мар—саккуна çеç пăхăнса тăмала тăвать, пур судсене те халăх заседателĕсем пулмала, ĕçсене судăн та ларăвĕсенче уçса-йăмала тăвать, айăпланакана защитăна тата хăйĕн тăван чĕлхипе усă курма права парать.

Çĕнĕ проект коммунисла парти программи ыйтнисене—суд обвиняемăйсене тытса пырас ĕçе кашни ĕççыннинех хутшăнтарассине пурнăçа кĕртме май парать. Судйасене хăйсен должноçĕсенчен тата халăх заседателĕсене хăйсен обязанноçĕсенчен хăтарасси вĕсене суйласа илнĕ [illegible] çĕçни [illegible] тата вĕсем çинчен пулнă суд приговорĕ тăрăх çеç пулма пултарать.

— Хальхи вăхăтра фашисла çĕршывсенче, уйрăмах Германире Итвайрс,—тесе паллă тăвать Рычков йулташ,—фашисла пуçлăхсем судрăн ĕççыннисене асаплантармали тĕрме туса хунă. Фашисла судсем вĕсем—намăсла комеди, вĕсем—правосудирен кулакан мăшкăласа кулни. Фашисла çĕршывсенче чарусăр саккунсăрлăх тата полици кирвеленни йĕрке асни пуç пулса тăрать, çаксем ĕнтĕ уйрăм çынăн иркĕлĕхне тивĕçлĕхне усçăнăх та тӳрех таптаса тăраççĕ.

ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви Положени проекчĕ,—тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне Рычков йулташ,—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене çакна кăтартса парать: совет çĕршывĕнче кăна чăн-чăн халăх сучĕ, чăн-чăн демократиллĕ суд пулма пултарать. Тăшмансен асра тытса тăччăр: кам та кам совет халăхĕн телейлĕ пурнăçне çине, социализмлăх чечеклененен, хăвасла çĕршыв çине халăх варлăнчăк аллине çĕклеме хăйать, унăн пуçĕ çине совет правосудийĕн хĕççĕ малашне те тăл тата пĕр шеллемесĕр анса тăранĕ.

Союз Совечĕнче

Августăн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Союз Совечĕн 5-мĕш ларăвĕ пулнă. Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви Положени проекчĕ çинчен Союз Совечĕн Саккунсем хатĕрлекен Комиссин членĕ депутат Шагимардановăн содоклад тăвать.

— Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă ССРС судоустройстви Положенийĕн проекчĕ,—тет депутат Шагимарданов,—аслă Сталинла Конституци ыйтнисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăрать.

Шагимарданов йулташ çапла калать: Союз Совечĕн Саккунсем хатĕрлекен Комиссийĕ Верховнăй Совета проект тăратнă сĕнусене йышăнма сĕнет,—тет.

Прениссенче чи малтан ССРС Верховнăй Суд членĕ Гольцов йулташ тухса калаçать. Вăл çапла калать: судоустройствăн çĕнĕ Положени проекчĕ — социализмлă кисренми никĕсĕсене пур тĕрлĕ тăшмансем, фашисла тара кĕрĕвĕн ярсăрсем тапăнасран сыхлассишĕн, хăварăн аслă социализмлă тăван çĕршывăн гражданĕсен прависене интересĕсене сыхлассишĕн кĕрешес ĕçре совет судне рабочисемпе хресченсен государстви тата хăватлăрах хĕççи пăшалĕ туса хумалли тĕрĕклĕ никĕс пулса тăрĕ.

— Сталинла Конституци,—тет депутат З. А. Андрейева,—общественнăй социализмлă харпăрлăха—совет стройĕн таса та никĕсне пырса тĕкĕнмелле мар никĕсне, тăван çĕршыв пуянлăхĕсене хăварăн çăлкуçне, пĕтĕм ĕççыннисен пулăн та культурăлă пурнăçĕн çăлкуçне сыхлама та çирĕплетме хушать. Судоустройствăн çĕнĕ Положенийĕ социализмлă харпăрлăха çаратакансене хирĕç тата ытларах çине тăрса кĕрешме май парать.

Андрейева йулташ РСФС Республикин Чăваш АСС Республикин прокуратурисен ĕççесĕне хытă критикленĕ.

Национальноçăсен Советĕнче

Августăн 15-мĕшĕнче каçхине Национальноçăсен Совечĕн 5-мĕш ларăвĕ пулнă.

Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем.

ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви Положенийĕн проекчĕ çинчен Национальноçăсен Совечĕн Саккунсем хатĕрлекен Комиссин председателĕ депутат Туркин содоклад тăвать.

— Саккунсем хатĕрлекен Комиссийĕ,—тет Туркин йулташ,—судоустройстви Положенийĕн çакăнта тăратнă проектне Сталинла Конституци ыйтнисенпе йăлтах килĕшӳлĕ тесе шутлать тата проекта ырлама сĕнӳ паратать.

Туркин йулташ Комиссин ячĕпе, Положени проектне кĕртме сенсе чылай хушусем тăратать, тата тĕплĕнрех каласа хăварималли вырăнсене кăтартса парать. Уйрăмах кĕсен; Положенийĕн 5-мĕш статйине çакнă хушса туллилетме сĕнет: уйта ССР Союзĕнче правосуди пурнăçĕн те пĕр тата пĕртан судпа пулса пырать, çынна пурлăх, службă тĕлĕшĕнчи положенине шута илсе тата социалла положение шута илсе ĕçе улăштарна, çавна пекех тата çын менле расаран тата национальноçран тухнине кура ĕçе улăштарна пулма пултараймасть.

Прениссенче Горбачов, Бажулин, Йефремав, Ионычев, Мамуканц тата Бармашов депутатсем, РСФСР Юстици Халăх Комиссарĕ Дмитрийев йулташ РСФСР Верховнăй Судĕн председателĕ Солодилов йулташ тата ССРС Верховнăй Судĕн çар коллегийĕн председателĕн заместителĕ Никитченко йулташ тухса калаçнă. Тухса калакансем пурте судоустройстви Положенийĕн проектне пĕр çын пек пулса ырлаççĕ.


Дмитрийев йулташ, халăхăн культурине пурнăçри ырлăхĕ ӳссе пынине пĕрле, Совет Союзĕнче преступленисем тăвасси мĕнле пысăккăн чакса пыни çинчен интереслĕ тĕслĕхсем илсе кăтартать.

Йустици Халăх Комиссариатĕнче пулнă, халь тăрă шыв çине кăларнă сатăрçăла руководствăн суд çыстемине çĕмĕрме тăрăшнă тата тӳрĕ кăмăллă, айăпсăр совет гражданĕсене варлас ĕçре судпа усă курнă.

Сталинла Халăх Комиссарĕ Н. И. Йежов йулташ йĕртсе пыракан мухтавлă совет разведки сăтсăлла-троцкисла террорла блок ту пĕтлĕнине фашисла шпионсен, бандитсен ярсăр йăвисене хуратса тухнă. Çак хисеплĕ ĕçре Шагте ĕçĕн Халăх Комиссариачĕн органĕсенче пĕтĕм вăйсемпе пулăшса пынас пулать.

Прениссенче тухса калаçакансем ССРС Йустици Халăх Комиссариачĕн тата унăн органĕсен ĕççинчи чылай ситменлĕхсене критикленĕ.

(ТАСС).



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Украинăри К(б)П Тĕпкомĕн секретарĕ Н. С. Хрущов Союз Совечĕн Çессин пĕррemĕш ларăвĕнче тухса калать.

Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Августăн 15-мĕшĕнче Союз Совечĕн ларăвĕнче З. А. АНДРЕЙЕВА депутат каланă сăмах

Депутат йулташсем! „ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви Положенийĕ" Çессине пăхса тухма тăратнă проектне Сталинла Конституци тăрăх, тĕнчере пĕртен пĕр чăн-чăн демократилле, Конституци тăрăх тунă.

Судоустройстви положени проекчĕ çыншăн пысăккан тăрăшни не палăртса тăрать. Çак документ пирĕн—ССР Союзĕ гражданисен прависен ĕçре пурнăçа кĕни.

Судоустройствăн çĕнĕ положенийĕ совет судне халиччен пулман çӳллĕше хăпартать. Вăл положени суд ĕçне пахалăхпе ӳстерме, мĕн пур суд органĕсен ĕççине лайăхлатма хушать.

Пирĕн совет правосудийĕ социализмлă таса харпăрлăх çине кирек мĕнле те пулсан та çĕклесен [illegible] харпăрлăх айăплать. Сталинла Конституцин 131-мĕш статйи общественнăй социализмлă харпăрлăха,—совет йĕркин чи таса, никам тĕкĕнмеле марлăхнĕсĕ, хамăрăн тăван çĕршыв пуянлăхĕсене кăларакан çăлкуçĕ, мĕн пур ĕççыннисен пулăн та культурăллă пурнăçĕн çăлкуçĕ пулса тăракан харпăрлăха,—упраса, çирĕплетсе пыма хушать.

Çĕнĕ положени социализмлă харпăрлăха вăрласа пĕтерекенсене тĕтăк[illegible], витĕмлĕн хĕрешме мобилизацилет.

Проект пирĕн совет сучĕ уйрăмлăхĕсене, преступникене тӳрлетес тата тĕрĕс воспитани пирки ĕçре вăл мĕнле вырăн йышăннине тăрре уççăн кăтартса парать.

Ленин йулташ суд уйрăмах пысăк вырăн йышăнат, суд вăл çĕнĕ социализмлă дисциплинăна тата ĕççыннисен хăйсен дисциплинине вĕрентекен органĕ, вăл орган ĕççыннисене тӳрĕ кăмăллă ĕççипе йĕркеллĕ пулма хăнăхтарать. Социализмла йĕркесене Конституци туса пуракан Сталин йулташ та пире çавăн пек вĕрентет.

Совет сучĕ тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнакансене чи хыттăрăн айăпласси уйăмачĕ те чарапнă тăмасть. „Тăван çĕршыва пăраса тăшмана сутăнни: присяга пăсни, тăшман енне куçни, государствăн çар вăй-хăватне сиенлĕ тунни, шпионлани—чи пысăк усал ĕç тесе шутлани, саккунăн мĕн пур хаярлăхĕпе айăпланать". Çапла калать Сталинла Конституцин 133-мĕш статйинче.

Фашисла сутăнчăк ярсăрсене, троцкисла-бухаринла шпионсене, сатăрçăсене диверсантсене нимĕнле ырăу çук тата пулмаст те. Вĕсене совет судĕнчен нимĕнле ырăу çук тата пулмаст те!

Пирĕн суд халиччен тĕнче курман демократилле пулни, судьясене суйласа лартасси—совет сучĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме тăваççĕ. Пирĕн çĕршывра судья—хисеплĕ çын. Судьян авторитечĕ пулмалла, вăл политикăпа та саккунсене те лайăх пĕлекен çын пулмалла. Апла халăх шанчăк тата хисеплĕ. Унăн совет саккунĕсене кĕрешесси пулмалла.

Совет сучĕ—рабочи клас диктатуринчи пите кирлĕ те çивĕч хĕçĕшĕнчи. Судан тĕрĕс те тӳрĕ кăмăлла ĕçлемелле, пĕр енле куçса инкек туса кăламаллă мар.

Йустици прокуратура органĕсен ĕççине кăтартулă, большевикла йĕрке туса кирлĕ.

Ленин çапла калать: „Кăшт кăна саккуна хирĕçле ĕç туни, совет йĕркине хăшт кăна пăснине тесе сăлăк пулса тăрать, вăл ĕççыннисен тăшманĕсене сăнăх усă курасçĕ".

Саккуна судпа прокуратура органĕсен хăйсен пăхни пирки уйрăмах нимĕн чăрмансăр пулмалла.

Депутат йулташсем! Пĕтĕм инстанцисене суд инстанцийĕсене пăхса тухса кăтартса паре, вăл инстанцисен суд приговорĕсене çирĕплетне пăхса тухасса. Крайсене областсен сучĕсен, çавăн пекех союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Судĕсен президиумĕсене вăйсен пĕтересçĕ.

Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Суд председательсем, ССРС Верховнăй Суд председателĕ, союзлă республикăсен прокурорĕ пе, союзлă республикăсен прокурорĕсен протеспе юзлă республикăсен Верховнăй Суд çине пе ССРС Верховнăй Судĕ çеç тешĕ [illegible] пăхса тухма пултараççĕ. Суд инстанцийĕсен нимĕн тĕрлĕ [illegible] [illegible] кăтартса пĕр.

(Пулăшни 2-мĕш страницăра)

Августӑн 15-мĕшĕнче Сойуз Совечĕн ларӑвĕнче Андрейӗва депутаткалана сӑмах

(ЙУЛАШКИ)

Шупашкар хулинче пурӑнакан граждансем йурлӑх уйӑрасси ҫинчен пуҫласа йана ĕҫ 1934 ҫултанпа тӑсӑлат. Вӑл ĕҫе тĕрлĕрен суд инстанцийĕсенче: кассаци коллегинче, Чӑваш республикĕнчи Верховнӑй Судӑн президиумĕнче, пленумĕнче, Федерацин Верховнӑй Судĕнче ҫичĕ хут пӑхса тухнӑ. Вӑл ĕҫ федераци прокурорĕ патĕнче те пулнӑ. Пĕр суд инстанцинчен теприне вĕҫсĕр куҫарса ҫӳретнине пула, вӑл ĕҫе халиччен те татса паман-ха.

Суд волокити ҫинчен тата тепĕр тĕслĕх илсе кӑтартатӑп. А. гражданкӑ 1936 ҫулта алимент шыраса суда панӑ. Ку ĕҫе халӑх судĕнче икĕ хут, Чӑваш республикĕн Верховнӑй судĕнче 4 хут, РСФСР Верховнӑй судĕнче 1 хут пӑхса тухнӑ, анчах ҫапах та вӑл ĕҫе татса паман.

Ҫакнашкал тивĕҫсĕр волокита суд авторитетне тӳррĕмех ҫĕмĕрсе пынӑ.

Епĕ кадрсем ҫинчен тӑракан ыйту пирки чарӑнса тӑрасшӑн. Судпа прокуратурӑ работникĕсен кадрĕсене ҫирĕплетес тĕлĕшпе нумай ĕҫлемеле-ха.

Халӑх тӑшманĕсем ку ĕҫре те сахал мар сӑтӑр тунӑ. Вĕсем судпа прокуратурӑ аппаратне йут, политикӑ тĕлĕшĕнчен иккĕлентерекен ҫынсем лартса тултарнӑ, вӑл ҫынсем совет сучĕн авторитетне йури ҫĕмĕрсе пынӑ. Пĕр колхозницӑ, колхоз тыррине ҫĕртсĕ йанӑшӑн колхоз председательне критикленĕ. Халӑх судйи Анисимӑвӑ ӑна елексĕ вырӑнне хурса, судна айӑпланӑ. Тырра ҫĕртнĕ факт тĕрĕс пулнӑ.

Пирĕн патра, Чӑваш республикин уйӑрӑм районĕсенче, икĕ ҫул хушшинче судйасем пилĕкшер, ҫичшер хут улшӑннӑ. Ҫавӑн чух ĕҫ пахалӑхĕ ҫинчен калаҫмали те ҫук. Нумай судйасем хӑйсен ĕҫĕ ҫинчен пĕрре те отчот туман тата ĕҫе пӑхса тухма вырӑнсене тухса курман.

Судоустройствӑн ҫĕнĕ Положенийĕ, судйасене суйласа лартмала туни ҫак ответсӑрлӑха тĕпренех пĕтерет. Йустици Халӑх Комиссариачĕн халӑх сучĕсене йертсе пырас ĕҫе лайӑхлатас пулат. Руководствӑра конкретлӑх тата оперативлӑх ҫителĕксĕр-ха.

РСФСР Йустици Халӑх Комиссариачĕпе Прокуратури жалӑбасене пӑхса тухас ĕҫрен пӑрӑнса тӑраҫҫĕ: халӑх сучĕсен решенийĕсем пирки ийулĕпе август уйӑхĕсенче Чӑваш республикĕнчен надзор йĕркипе илнĕ 92 жалӑбӑна вĕсем пӑхса тухма каҫала йанӑ.

Судоустройствӑн ҫĕнĕ Положенийĕ ҫак ҫитменлĕхсене пурне те пĕтерме тивĕҫ.

Нимĕн иккĕленмели те ҫук, ҫакӑнта тӑратнӑ положени проектне Ҫĕҫҫи пĕр кӑмӑллӑ пулса ырӑлĕ тата ҫирĕплетĕ, мĕншĕн тесен ӑна пирĕн йуратнӑ ҫулпуҫ Сталин йулташ тунӑ хамӑр Конституци тӑрӑх туса хатĕрленĕ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫĕ).

Тулли пурӑнӑҫ

Октябĕр револӳцийĕчен Пысӑк Чӑрӑш (Ҫĕрпӳ р.) йалĕнчи хресченсем ытла та чухӑн пурнӑҫпа пурӑннӑ. Пĕрер йе икшер чӳречелĕ чалӑшнӑ пӳртсем йалӑн илемне йарса ларнӑ. Йалта 5—6 хуҫалӑхӑн кӑна ҫĕнĕ тырпулччен ҫиме ҫитнĕ, ыттисен ҫулленех ҫитмен. Пуйанкуштансем йалта хуҫа пулнӑ, лайӑх ҫĕрсене акнӑ, чухӑнсене хӑйсем патĕнче ĕҫлеттернĕ.

Вӑл вӑхӑтра Пысӑк Чӑрӑшра хут пĕлекен пулманпа пĕрех. Йалта пĕр Алексей Григорӑев ҫеҫ хаҫат илсе тӑнӑ, кулӳтурӑ ҫинчен калаҫмали те пулман.

Октябĕр револӳци хыҫҫӑн тин йала ҫутӑ пурнӑҫ пырса кĕчĕ. Октябĕр тивлечĕпе хресченсем телейлĕ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ ҫулĕ ҫине тӑчĕҫ —вĕсем колхоза пĕрлешсе хӑйсен пурнӑҫне тĕпренех аванлатрĕҫ. Колхоз организацийе хуҫалӑх тĕлĕшĕнчен ҫулран-ҫул ҫирĕпленсе пырат.

Колхоз ҫумне государствӑ ĕмĕрлĕхех усӑ курма актӑпа 418 гектар ҫĕр ҫирĕплетнĕ. Вӑл ҫĕр ҫинче колхозниксем агрономи кӑтартӑвĕ тӑрӑх ĕҫлесе тырпул тухӑҫлӑхне ӳстереҫҫĕ. Пур ĕҫре те машинӑсемпе анлӑн усӑ кураҫҫĕ. Колхозӑн 1 молотилкӑ, 2 жнейка, 1 косилкӑ, 1 сейӑлкӑ, т. ыт. пур. Ҫак машинӑсем колхозӑн ĕҫне вӑхӑтра тата пахалӑхпа туса пыма май параҫҫĕ.

Колхозниксен килĕнче чечексем ҫитĕнеҫҫĕ, партипе правительствӑ руководителĕсен портречĕсем пӳлĕме илемлетеҫҫĕ. Ĕлĕкхи вӑхӑтра сӑмаварсем, сеткесем, тимĕр кроватсем пулманпа пĕрех, халĕ вĕсен йышĕ нумай ӳсрĕ. Акӑ, колхоза кĕнеренпе чухӑн хресчен ачи, ӑшшĕсĕр ӳснĕ Петр Степанӑв пуйан пурнӑҫпа пурӑнма пуҫларĕ. Иртнĕ ҫулта арӑмĕпе иккĕш ĕҫлесе 608 ĕҫкунĕ туса 217 пӑт тĕштыра илчĕ. Халĕ 2 ĕне, 2 сысна, 6 сурӑх тата чӑх-чĕпсем усрат.

— Колхозра кӑна епĕ ҫын пултӑм, тулли савӑнӑҫлӑ пурнӑҫпа пурӑнма пуҫларӑм. Ҫак телейлĕ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫа туса панӑшӑн коммунистсен партипе унӑн ҫулпуҫне Сталин йулташа чĕререн тав тӑватӑп,—тет вӑл.

Йалта инженерсем 2, техниксем —2, зоотехниксем 6, учительсем—6 тата партипе совет оргӑнĕсенче нумай ĕҫлеҫҫĕ. Шкул ҫулне ҫитнĕ ачасем пурте вĕренеҫҫĕ, техникумсенче вĕренекенсен йышĕ те пысӑк.

П. Иванов.

Тĕштырӑсем ҫинчи вутпуҫҫи

Нумай тĕштырӑсем ҫинче вутпуҫҫисем пулаҫҫĕ, ҫавӑн пирки вара тырпул тухӑҫĕ те нумай чакат. Кӑҫалхи тырпулсене тĕпчесе пӑхнӑ хыҫҫӑн, хӑшпĕр колхозсенче вутпуҫҫисем пит нумай сарӑлни паларнӑ. Акӑ, тĕслĕхрен „Канаш районĕнчи „Мотор" колхозра „Симбилеевская 0146" текен суртлӑ кĕрхи тулӑ ҫинче 81,93 процент таран хытӑ вутпуҫҫи сарӑлнӑ, „Канаш" колхозра—36,9 процент, Молӑтӑв йачĕпе тӑракан колхозра—41,63 процент вутпуҫҫи паларнӑ. Ҫавӑн пиркийех Канаш районĕнче кӑҫал 6 колхозра суртлӑ тулӑна вӑрлӑх валӗҫи хӑварма чарнӑ, 17 колхозра вӑрлӑх участкисене бракланӑ.

Йелчĕк районĕнчи Дзержинский йачĕпе тӑракан колхозра „Дюрабль" текен суртлӑ кĕрхи тулӑ ҫинче 28,8 процент, „МОПР" колхозра ҫав суртлӑ тулӑ ҫинче 25 процент, „Свобода" колхозра—23,4 процент хытӑ вутпуҫҫи сарӑлнӑ. Ҫавӑнпа Йелчĕк районĕнче 7 колхозра „Дюрабль" текен суртлӑ тулӑва, 20 колхозра „Симбилеевская 0146" суртлӑ тулӑна вӑрлӑхлӑх хӑварма чарнӑ. Ку тĕлĕшпе ытти районсенче те ĕҫсем чаплах мар. Вӑрмар районĕнче „Дюрабль" суртлӑ тулӑна 60 гектар, Вӑрнар районĕнче—5? гектар, Шӑхасан районĕнче—47 гектар, Йĕпреҫ районĕнче—40 гектар вӑрлӑхлӑх хӑварма йурӑхсӑр тесе йышӑннӑ.

Пучахлӑ тырӑсем, уйрӑмах кĕрхи тулӑсем ҫинче вутпуҫҫи вӑйлӑн сарӑлни вӑл—вӑрлӑхсене чӳкесе акманнипе пулнӑ. Ку тĕлĕшпе Шӑхасан районĕнчи М. Горький йачĕпе тӑракан колхоза илсе кӑтартма пулат. Ку колхозра „Симбилеевская 0146" текен суртлӑ кĕрхи тулӑна пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадӑсенче чӳхемесĕр акнӑ. Ҫавӑнпа кунта тулӑ ҫинче хытӑ вутпуҫҫи 80 процент таран сарӑлнӑ. *Вӑрлӑх участкисенче, вӑрлӑхсене* вутпуҫҫирен чӳхесе акнӑ ҫĕрте, вутпуҫҫи 3 процент анчах пулнӑ.

Шӑхасан районĕнчи „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозра „Дюрабль" суртлӑ тулӑна чӳхемесĕр акнӑ пирки, ун ҫинче 29 процент, Йелчĕк районĕнчи Калинин йачĕпе тӑракан колхозра суртлӑ кĕрхи тулӑ ҫинче хытӑ вутпуҫҫи 9,2 процент сарӑлнӑ. Унпа йунашар „Воин" колхозра ҫав сурт тулӑнах вутпуҫҫирен чӳхесе акнӑ. Кунта вара ҫав тулӑ ҫинче хытӑ вутпуҫҫи 0,49 процент ҫеҫ пулнӑ. Ҫавӑнпа та ĕнтĕ вӑрлӑхсене тĕплĕн чӳхесен тырӑсем ҫинчи вутпуҫҫийе пĕтерме май пур.

Тырӑсем ҫинче вутпуҫҫи сарӑласси чӳхемели йапалана тĕрĕс мар хатĕрленинчен те килет. Хӑшпĕр колхозсенче вӑрлӑхсене чӳхемели йĕркесене пӑхӑнса ĕҫлемен. Хӑшпĕр ҫĕрте вӑрлӑхсене типĕ майпа чӳхенĕ чухне, чӳхемели йапаласене вӑрлӑхсемпе кĕреҫесемпе хутӑштарнӑ, йе лав ҫинче акма тухиччен хутӑштарнӑ. Паллах, ҫакӑн пек туни пачах тĕрĕс мар.

Кусемсĕр пуҫне тата чӳхенĕ вӑрлӑхсене дезинфекци туман ампарсене, михĕсем ҫине хунӑ тата дезинфекци туман ҫейӑлкӑсемпе акнӑ. Ҫавна май вӑрлӑхсем ҫинче тепĕр хут вутпуҫҫи сарӑлнӑ.

Ҫавӑнпа та ĕнтĕ вӑрлӑхсене чӳхесси ответлӑ ĕҫ пулмала. Халиччен тунӑ йанӑшсене малашне тумала мар.

Кӑҫалхи кĕракинче пĕтĕмпех вутпуҫҫирен чӳхенĕ вӑрлӑхсемпе акса хӑвармала. Чӳхемен вӑрлӑхпа акни пачах пулмала мар. Вӑрлӑхсене чӳхеме тытӑниччен, вĕсене малтан лайӑх тасатмала. Йĕпеле чӳхессине ҫакӑн пек йĕркепе туса иртерме кирлĕ: 40 процентлӑ пĕр пай формалина 300 пай шыв илсе хутӑштармала. Чухемели шыва чӳхес кунне хатĕрлес пулат. Малтан вӑрлӑхсене формалинпа хутӑштарнӑ шывра йĕпетмеле, унтан 2 сехет хушши купасене витсе выртармала та, типĕтмеле. Вӑрлӑхсене хĕвел ҫинче типĕтме кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вĕсен шӑтса тухас хӑвачĕ чакма пултарат. Вӑрлӑхсене купара та йĕпетме пулат. Кун пек тӑвас пулсан, вӑрлӑха тӑрӑхларах купа тумала, унӑн хулӑмӑшĕ 30 сантиметр пулмала. Купа тӑвиччен урайне тасатса, дезинфекци тӑвас пулат. Купа тунӑ хыҫҫӑн вара формалин шывĕпе йĕпетме йурат.

Вӑрлӑхсене йĕпеле майпа чӳхессине акма тухаччен 2—3 кун малтан туса иртермеле. Пĕр тоннӑ вӑрлӑха чӳхеме 100 литр формалин шывĕ кирлĕ. 40 процентлӑ пĕр килограм формалинпа 30 центнĕр тыра чӳхеме пулат. Тулӑпа ыраш вӑрлӑхĕсене ҫурма йĕпе майпа чӳхеме йурамаст.

Типĕле чӳхессине АБ тата ПД препаратсемпе туса иртереҫҫĕ. АБ препаратпа вӑрлӑха кирек хӑҫан та (5—6 уйӑх малтан) чӳхеме йурат.

Вӑрлӑхсене типĕле майпа чӳхенĕ чухне обйазательнӑ АБ—2, „Идеал" тата „Урожай" машинӑсем кирлĕ. Вĕсем пулмасан йатарласа тунӑ пичкесемпе те чӳхеме пулат.

Колхозсенче тата районсенчи вӑрлӑх хуҫалӑхĕсенче вӑрлӑх участкисем ҫине акмали тулӑ вӑрлӑхĕсем ҫинче вутпуҫҫисем сарӑлнӑ пулсан, вĕсене вара термически текен майпа (вĕри шыв ҫинче) чӳхемеле.

Вӑрлӑхсене чӳхенĕ чухне те, чӳхенĕ хыҫҫӑн та вĕсем ҫинче вутпуҫҫи тепĕр хут сарӑласран сыхланмала. Ҫавна май вӑрлӑхсем хуракан ҫуртсене, михĕсене, ҫейӑлкӑсене формалин шывĕпе (пĕр пай формалин илсе 100 пай шывпа хутӑштарса) ҫумала.

Вутпуҫҫи сарӑлнӑ тырӑсене ыттисенчен уйрӑм усрама кирлĕ. Ҫĕнĕ тырра складсемпе ампарсене хуриччен, вĕсене малтан дезинфекци тӑвас пулат. Ҫакӑн пек ĕҫлесен ҫеҫ тырпулсем ҫинчи вутпуҫҫийе пĕтерме пултаратпӑр.

Чӑваш АССР Ҫĕрĕҫ Халӑх Комиссариачĕн агрономĕ

Н. Кондаков.

Государствӑна тырӑ параҫҫĕ

*** Шӑхасан районĕнчи „Канаш" колхоз ыраш вырса пĕтернĕ хыҫҫӑнах авӑн ҫапма тытӑнчĕ. Халь суртрисене те вырса пĕтернĕ. Авӑн ҫапас ĕҫ хĕрӳлĕн пырат. Колхоз малтан ҫапнӑ таса тырра государствӑна парса, кĕрхи тырӑсем йенĕпе обйазательствӑна тултарчĕ.

С. Йефимӑв.

*** Максим Горький йачĕпе тӑракан колхоз (Шӑмӑршӑ р.) кӑҫал августӑн 5-мĕшĕнчех государствӑна обйазательнӑй йĕркепе памалли тырра пур йышши кулӳтурӑсем йенĕпе те парса татрĕ. Ҫакӑнпа пĕрлех колхозниксем аш-какай памалли обйазательствӑсене те 1938 ҫулшӑн пĕтĕмпех парса ҫитерчĕҫ.

Н. Алексейӗв.

*** Тӑвай районĕнче чылай колхозсем государствӑна тырӑ парса татрĕҫ. „Коммунар", „Искра Ильича", „Красная Чувашия" тата Молӑтӑв йачĕпе тӑракан колхозсем чи мала тухрĕҫ. „Ҫӑлтӑр" тата „Мартӑн 8-мĕшĕ" колхозсенче те государствӑна тырӑ парас ĕҫсене лайӑх йĕркеленĕ.

Вл. Илйин.

*** Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Самолет", „Агроном" тата „Прогрĕсс" колхозсем тырпулсене кĕске срукра пуҫса кĕртсе, государствӑна кĕрхи тырӑсене парса татрĕҫ. Халь государствӑна лесме суртрисене ҫапаҫҫĕ.

Е. Самарин.

*** Канаш районĕнчи Сталин йачĕпе тӑракан колхозри 2-мĕш бригадӑ августӑн 10-мĕшĕнче государствӑна тырӑ лесҫе пачĕ. 1-мĕшпе 3-мĕш бригадӑсем тепĕр кунне лесрĕҫ.

С. Леонтйӗв.

*** Трак районĕнчи Тельмӑн йачĕпе тӑракан колхоз кĕрхи тырӑсем йенĕпе государствӑ умĕнчи обйазательствӑна ийулĕн 31-мĕшĕнчех тултарса ҫитерчĕ. Августӑн 2-мĕшĕнче ыраш кĕлтисене капана хывса пĕтернĕ.

А. Митрофанӑв.

*** Ишлей районĕнчи „Клевĕр", „Труд" тата Свердлов йачĕпе тӑракан колхозсем государствӑна кĕрхи тырӑсене парса татрĕҫ. Халь ку колхозсенче государствӑна пама ҫурхи тырӑсене ҫапаҫҫĕ.

Ҫеребрйаков.

Кĕракине тухас умĕн

** Ҫĕрпӳ районĕнчи „Броневик", „Радио", „Ҫĕнĕ ҫул" тата „Камай" колхозсем кĕрхи тырӑсене акма тухма хатĕрленсе ҫитеймен. „Броневик" колхозӑн пурĕ 4 ҫейӑлкӑ, анчах вĕсем пурте ванчӑк лараҫҫĕ. „Ҫĕнĕ ҫул" колхозра та 2 ҫейӑлкӑ йусавсӑр выртаҫҫĕ. Кунта вӑрлӑхсем те хатĕр мар.

К. Михайлӑв.

** Сĕнтĕрвӑрри районĕнчи Ĕсмĕлти „Ударник" колхоз кĕрхи тырӑсене акма хатĕр мар. Вӑхӑт нумай пулнӑ пулсан та ҫĕртме сухине халь те туса ҫитереймен. Ку вӑл бригадирсем васкаманнинчен килнĕ. Колхоз правленийĕ те кĕракине хатĕрленес ĕҫсене йĕртсе пымаст.

Вл. Сид..аков.

** Шупашкар районĕнчи Каганович йачĕпе тӑракан колхоз кĕрхи тырӑсене акма тухма хатĕрленсе ҫитмен. Вӑрлӑхсене тасатман, плугсем ҫĕмрĕк, пĕр ҫейӑлкӑ ванчӑк.

А. Моисҫейӗв.

Пысӑк тухӑҫлӑ йӑвӑҫ улми пухса илет кӑҫал Сталин йачĕпе тӑракан колхоз (Адлер р., Краснодар крайĕ).
ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: колхозри ударник С. В. Матушенкӑ йӑвӑҫ улмине пухат.
Г. Мески фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

Выльӑхсене хĕл каҫарма лайӑх хатĕрленер

Кĕркунне ҫывхарса килет. Ҫавӑнпа колхозсенче выльӑх-чĕрлĕхсем валеҫи тума пуҫланӑ витесене тата кӑҫал тума палӑртнӑ витесене туса ҫитермеле. Апла пулсан та Сĕнтĕрвӑрри районĕнче колхозсем витесем тӑвас, киввисене йусас тĕлĕшпе васкамаҫҫĕ-ха. Уйрӑмах, Наратйал агроучасткине кĕрекен колхозсенче выльӑхсем валеҫи апат хатĕрлес, ҫĕнĕрен витесем тӑвас ĕҫсем начар пулса пыраҫҫĕ. Кунти колхозсем иртнĕ ҫулта тума пуҫланӑ витесене туса ҫитерме халь те пуҫӑнман.

Анатри Карапашри „Волгарь", Вӑрманкассинчи „Кулӳтурӑ" колхозсем выльӑхсене хĕл каҫарма тĕплĕн хатĕрленеҫҫĕ. Ҫак колхозсенче выльӑхсем валеҫи кирлĕ таран апат хатĕрленĕ. Ҫулҫӑлӑ апат тата 40-шер тоннӑ ҫилос хывса хӑварнӑ.

Наратйалĕнчи „Красное Сормово" колхозра 45 лаша валеҫи ҫĕнĕрен вите тума пуҫӑнни 3 ҫул ҫитет, ҫапах туса ҫитереймеҫҫĕ. Тури Карапашри Мичурин йачĕпе тӑракан колхоз выльӑхсене хĕл каҫарма хатĕрлеме тытӑнман та. Ку колхозра фермӑри выльӑхсене усрама йатарласа тунӑ вите ҫук. Апла пулсан та вите тӑвасси ҫинчен шухӑшламаҫҫĕ.

Ҫĕнйал Пукашри „Правда", Шупкари „Труженик" колхозсенче фермӑ витисене урӑх ҫĕре куҫарма тата ҫĕнĕрен витесем тума палӑртнӑ. Анчах ку ĕҫсене тума пĕр колхозра та пуҫӑнман.

Ҫакнашкал тĕслĕхсем ытти агроучасткӑсенче те пур. Ҫĕнĕрен витесем тӑвасси, тума пуҫланӑ витесене туса ҫитересси, киввисене йусасси—колхозсен пысӑк задачи пулмала. Кашни колхозӑн выльӑхсене хĕл каҫарма тĕплĕн хатĕрленмеле.

Зоотехник П. Ваҫилйӗв.

Ладо Кецховели

(Вилнĕренпе 35 ҫул тултарнӑ тĕле)

Вӑтӑр пилĕк ҫул кайала, 1903 ҫулхи августӑн 17-мĕшĕнче Кавказ лешйенче, Метех тĕрминче патша тытӑмне хирĕҫ, капитализма хирĕҫ ывӑнма пĕлмесĕр, хĕрӳллĕн кĕрешекен Ладо Кецховелине патша палачĕсем вĕлернĕ. Вӑл, грузи халӑхĕн чи лайӑх ывӑлĕсенчен пĕри, Сталин йулташӑ аллаллӑн тытӑнса ĕҫлесе, Кавказ лешйенче револӳцилĕ социал-демократин йалавне — Ленин йалавне ҫĕкленĕ.

Кецховели йулташӑн кунҫулĕ вӑрӑм пулман—мĕн пурĕ те 1876 ҫултан пуҫласа 1903 ҫула ҫити, 27 ҫул ҫеҫ пулнӑ. Анчах та вӑл вĕҫĕмсĕр револӳцилĕ кĕрешӳпе тулнӑ. Ладо ҫамрӑк ача чухнех хӑйĕн ашшĕпе—йал пупĕпе хресченсенчен чиркӳ валеҫи пухакан кулакнайшӑн хирĕҫсе калӑҫнӑ. Ладо пупсене тӳлеме кирлĕ марри ҫинчен, турӑ ҫукки ҫинчен, пупсем ӑна хӑйсене пуйма мел шухӑшласа кӑларни ҫинчен кӳршĕ хресченĕсене каласа ӑнлантарнӑ.

Унӑн ывӑнусӑр кĕрешӗвĕ кĕске пурнӑҫĕн йулашки минучĕччĕнех, Метех тĕрминче патша тарҫисем вĕлериччĕнех пынӑ.

Акӑ ҫамрӑк Ладо—Горири духовнӑй училищӑн 4-мĕш класĕнче вĕренекен ача. Вӑл ку вӑхӑтра алпа ҫырса „Гантиади" („Рассвет") йатлӑ журнала кӑларассине йĕркеленĕ. Унӑн ӑна хӗсӗрлеме пуҫланӑ. Чи лайӑх вĕренсе пыракан Ладона училищӑна вĕренсе пĕтерме паман. Йулашки класра, „йусайма" тесе тӑтах тепĕр ҫуллӑха хӑварнӑ. Ҫакӑнта ĕнтĕ Ладо Горири духовнӑй училищӑра вĕренекен Сталин йулташпа паллашса ҫывӑхӑн туслашат.

Училищӑрӑн вĕренсе тухнӑ хыҫҫӑн, Кецховели Тифлисри духовнӑй семинарине пите пысӑк йӑвӑрлӑхпа кĕрет, вӑл вӑхӑтра ку шкулта питĕ хытӑ йĕрке пулнӑ, преподавательсем студентсене вĕрентессинчен ытларах шпионаж ĕҫне туса пурӑннӑ, грузин тӑван чĕлхине вĕренессине пачах чарса лартнӑ.

1893 ҫулта Кецховели семинаристсен семинарири полицилĕ режима хирĕҫ пулнӑ пӑлхавне организацилесе йертсе пынӑ.

Ку пӑлхану пирки Тифлисри жандармсем ҫапла ҫырса пĕлтернĕ: Петербург, жандармсен корпус командирне. Православнӑй семинарире вĕренекенсенчен чылайӑшĕ, хӑшпĕр наставниксене кӑларса йама тата грузи литературин кафедрине тума ыйтса, заньятисене ҫӳреме пӑрахрĕҫ. Ӳкĕтлесиисем вырӑнсӑр пулчĕҫ..

Кийĕва куҫса, тĕрлĕ кансĕрлĕхсем пулнӑ хыҫҫӑн Кийĕври духовнӑй семинарине кĕрсен, Кецховели унти вӑрттӑн ĕҫлекен социал-демократилĕ кружоксемпе ҫыхӑнат.

Кунта вӑл пӳпсемпе жандармсем тӑчӑ ҫыхӑнса ĕҫленине лайӑх пĕлсе хӑнӑ. Кийĕври духовнӑй семинарин ректорĕ архимандрит Иоанникий Кийĕври жандармсен тытӑмне пырса, семинари инспекцийĕ Кийĕври духовнӑй семинарин 4-мĕш класĕнче вĕренекен Владимир Кецховели хватерĕнче тĕрĕслӳ туса иртерни ҫинчен пĕлтернĕ. Унӑн йапаласен йышĕнче крамолла кĕнекесем тупнӑ. Унтан вара ирĕккĕн вулама кӑларнӑ кĕнекесен —истори, политэкономи, философи, ҫавӑн пекех тата Лондонри „вырассен ирĕклĕ прессин" изданийĕсен списокне тӑратнӑ. Ҫавсем ҫинчен полици департаментне пĕлтерсе, Кийĕври жандармсен тытӑмĕ Кецховели патĕнче тупнӑ ытларах кирлĕ... нумай документсене тымлӗнрех асӑрхаса пӑхма хушнӑ.

„Икĕ ал ҫырӑвĕ. Вĕсене ҫапла йат панӑ: „Епĕр мĕншĕн кĕрешетпĕр", „1895 ҫул", вĕсенче Российӑри халӑхи йĕркене улӑштарасси пройекчĕ пур. Донесенинче Кецховели патĕнче тупнӑ сӑвӑпа та паларат. Вӑл патшана тата влаҫсене хирĕҫ пӑлханма, тата та ытларах, пурне те хĕрлĕ йалав айне тӑма, Российӑри регрессӑн сӑлтавĕ влаҫсем пулса тӑнине ӑнлантарса, пурне те баррикадӑсем патне тухма тата пĕтĕм халӑх вӑрҫине организацилеме чĕннĕ".

Донесени вĕҫĕнче „Владимир Кецховелине—суд умĕнче ответ тытасран тата лайӑхрах ыйтса тĕпчесрен ан пӑрӑнтӑр тесе, Кийĕв тĕрмине хупса лартни" ҫинчен пĕлтернĕ.

Тĕрмерен тухнӑ хыҫҫӑн полици асӑрхавĕнчен хӑтӑлсанах, вӑл пытанса пурӑнма тытӑнат. Унтан тӑван Кавказа таврӑнат. Сталинпа тĕл пулат. Сталин пуҫарӑвĕпе тата йертсе пынипе вӑл вӑхӑтала Грузири социал-демократсен револӳцилĕ-маркссла ушкӑнĕ организацийĕ пире палӑ. 1897 ҫулта Кецховели „Месаме-даси" йатлӑ организацие кĕрет.

Рабочисен револӳцилĕ йухӑмĕ ӳссе пынӑ май, вӑрттӑн тухса тӑракан социал-демократилĕ литературӑ кирли нумайран-нумай ӳссе пырат. Ладо Кецховели хӑйĕн умне ҫак задачӑна татса парас ыйтӑва лартат. „Вӑл типографине ĕҫлеме кĕнĕ, типографи ĕҫне тĕплĕн вĕренсе ҫитсĕ, ирĕклĕн ĕҫлекен типографинче пĕрремĕш хут Дикштейнӑн „Истори кӗскӗ хлеба" йатлӑ брошӳрине ҫавӑн пекех тата грузи чĕлхипе темиҫе прокламаци вӑрттӑн пичетлесе кӑларат.

Кецховели рабочисен массине ҫыхӑнса тӑрассине йĕркелесе тӑракани пулнӑ.

1899 ҫулта вӑл Тифлисра рабочисен Пĕрремĕш май йачĕпе иртернĕ вӑрттӑн пухӑвĕнче хĕрӳллĕ сӑмах каланӑ. Ҫав 1899 ҫулӑн вĕҫĕнчех вӑл Тифлисри рабочисен забастовкине йертсе пынӑ. Рабочисем 13 сехет ĕҫленĕшӗн 90 пус ҫеҫ илсе пурӑннӑ, унтан тата ҫав кĕлмĕҫлĕ ĕҫукҫин нумай пайне штрафсемшӗн тытсӑ йулнӑ. Штрафлассине тĕрлĕ сӑлтавпа, сӑлтавсӑр та штрафланӑ.

1900 ҫулта, Тифлисри ушкӑн тата Сталин йулташ вӑрттӑн типографи организацилеме панӑ заданийĕ пурнӑҫлас тĕлĕшпе, Кецховели парти ĕҫне тума Бакуна куҫат. Кецховели ку заданине ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кĕртет. 1901 ҫултан пуҫласа Бакура лайӑх йĕркеленĕ вӑрттӑн типографи ĕҫлеме тытӑннӑ, вӑл типографи Кавказри парторганизацин пурнӑҫĕшĕн кӑна мар, пирĕн пĕтĕм партишĕн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Вӑл типографинче 1901 ҫулхи кĕркуннерен пуҫласа Тифлисри Сталинпа Кецховели йулташсем организацилеӗ Ленин тата „Искра" хаҫат майлӑ револӳцилĕ социал-демократи оргӑнĕ—Грузири вӑрттӑн тухса тӑракан „Брдзола" („Борьба") йатлӑ пĕрремĕш хаҫат пичетлеме пуҫланӑ. Ҫав типографинчех Ленинла „Искра" хаҫат та пичетленнĕ.

Кецховели „Брдзола" хаҫатра пичетленнĕ „По поводу столетнего юбилея" йатлӑ статйине асаилме вырӑнлӑ кунта. Кецховели ҫав статйана Сталин хушнипе ҫырнӑ, ӑна уйрӑм прокламаци туса пичетлесе кӑларнӑ.

Грузи дворйанствин, самодержавин аттине ҫуллама йуратакансем, Грузи ҫĕршывне Российӑпа пĕрлештерни 100 ҫул тултарнине уйавланӑ. Кецховели хӑйĕн статйинче ҫав ыйтӑва калама ҫук таръӑн ҫутатса панӑ. Вӑл самодержавине ҫивĕччĕн критикленĕ; унӑн мĕскĕнлĕхне, пушӑлӑхне, вӑйсӑрлӑхне, намӑссӑр ывҫлӑхне кӑтартнӑ. Кецховели патша влаҫĕн вӑйĕ штыксем ҫинче тӑни ҫинчен ҫырнӑ. „Анчах таврӑру кунĕ ҫывӑх,—тенĕ Кецховели,—рабочисен вӑйĕ ӳсĕ, чун-халлӑ пĕрлĕхлĕх ҫĕрсе пыракан правительствӑна шиклентерет, ҫав пĕрлĕх гигантла ӳсее пынине ҫинче штыксем те тытса чараймĕҫ. Унӑн малашлӑхне истори туса пырат".

Кецховелин ҫакӑ аслӑ та пророклӑ сӑмахĕсем чуна хумхантарса пысӑк йуратупа вуланаҫҫĕ. Вĕсем—Ленин—Сталин аслӑ ĕҫĕн ҫĕнтерĕвĕшĕн хӑйĕн йунне пĕр тумлам йулмиччен йухтарнӑ ҫыннӑн сӑмахĕсем. Вĕсем—хӑйĕн хӗрӳллĕ револӳцилĕ чун хавалĕпе тата иксĕлми хастарлӑхпа самодержавине кӗтертсе пӑрахас, пирĕн ҫĕршывра капитализма тĕп туса хуракан вӑйа тӑвас тĕлĕшпе нумай ĕҫленĕ ҫыннӑн сӑмахĕсем.

„Брдзола" тата ытти вӑрттӑн изданисем—брошӳрӑсем, прокламацисем, листовкӑсем пичетлесе тӑнипе пĕрлех—Кецховели „Искра" хаҫатӑн урӑх государствӑри центрĕпе, В. И. Ленинпа ҫыхӑну тытнӑ, Бакури типографинче „Искра" хаҫатӑн номерĕсене йышлатарса пичетлесе тӑнӑ, „Искра" хаҫата Тавриз—Баку урӑй Российӑна илсе килессине организацилесе.

„Искра" хаҫатӑн номерĕсем Бакури рабочисем хушшинче пысӑк хисеппе саланнӑ. Жандармсем шӑртланнӑ. Вĕсем типографине тата Ладо Кецховелине шыраса супнӑ.

„Тифлисри жандармсен тытӑмĕ полици департаментне пĕлтерӗнинче" ҫакна ҫырнӑ:

„Иртнĕ ҫулӑн йулашки уйӑхĕсенче вӑрттӑн изданисене пичетлекен вырӑна нумай вӑйӑт шыранӑ хыҫҫӑн... мана шанса панӑ тытӑмра агентурӑ пĕтĕм прокла-

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче

Елĕк районĕнче партилĕ пропагандă ĕçĕ мĕнле тăни çинчен

Иртнĕ кунсенче ПСК(б)П Чăваш Обком бÿровĕ „Республикăра партилĕ пропагандă ĕçĕ мĕнле пыни çинчен тата вăл ĕçе лайăхлатмалли мăйсем çинчен" ПСК(б)П Обкомĕ 1938 çулти апрел уйăхĕнче йышăннă постановленине Елĕк райкомĕ мĕнле пурнăçласа пынине пăхса тухнă. ПСК(б)П Обкомĕ çакна палăртнă: Елĕк райкомĕ ПСК(б)П Обкомĕн решенийĕчен нимле вывăд та туман, ку ыйтăва сÿтсе те йавман. Районра парти вĕренĕвне çителĕксĕр йĕркеленĕ. Чылай кружоксене (парти кабинечĕ çумĕнчи парти истори, политграмăтă кружокĕсем) ПСК(б)П Обкомĕ кăтартса панă пек пухса йĕркелемен. Ку кружоксенче вĕренекенсен 8—15 çухрăм таран район центрне çÿремеле. Кружоксем плансăр ĕçлеççĕ. Чылай кружоксенче (МТС, Шăлти ĕççен халăх комиссариачĕн районри уйрăмĕ, Вăçкассинчи парти историне вĕренекен кружок) июль уйăхĕнче пĕр заңятие те ирттермен. Райĕçтăвкомри парти историне вĕренекен кружокра (кружок руководителĕ Кураңов йулташ) март уйăхĕнчен пе заңятисем пулман.

Вĕренÿ пахалăхĕ çителĕксĕр. Вĕренекенсенчен чылайĕшĕ заңятисене хатĕрленсе пымаççĕ. Августăн 7-мĕшĕнче йалпо çумĕнчи парти историне вĕренекен кружока 6 çынран пĕри çеç хатĕрленсе пынă. Вĕренекенсем килте вуласа хатĕрленмеççĕ, парти кабинечĕ те вĕсене пулăшу памасть. Парти кабинетĕнче консуңтаци организацилемен. Пропагандиссен çеминарĕсем вăхăтра пулса иртмеççĕ. 7 уйăх хушшинче пропагандиссемпе 11 çеминар кăна иртернĕ. Апла пулсан та парти райкомĕ партилĕ пропагандă ĕçне лайăхлатса йарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

ПСК(б)П Елĕк райкомне парти кабинечĕ çумĕнчи парти истори кружокĕн ĕçне тата райком çумĕнчи политграмăтă шкулне урăхлатса çĕнĕлле йĕркелеме хушнă. Йалсенчи кустри кружоксене вĕренекенсене пуранакан вырăнтан кружок заңатийĕсем пулакан вырăна çити 3—4 километртан ытла мар пулмалла туса организацилеме хушнă.

ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайне парти историне Ленин—Сталин „произведенисем" тăрăх вĕренекен кружокăн йулашки заңятине ирттерсе, вĕренекенсене вĕрентсе кăларнă çĕре, Елĕк районне уйрăм çын йама хушнă.

Елĕк райкомне кружоксен ĕçĕсене план тăрăх йĕркелесе йама, вĕсене йертсе пыма ĕçре тĕрĕсленнĕ пропагандиссене çирĕплетме, вĕренÿ пахалăхне лайăхлатса йамалли çинчен кăтартса панă.

Елĕк райкомне çитес ларусенче парти кабинечĕ ĕçĕсем çинчен сÿтсе-йавса, пропагандиссен çеминарне лайăхлатса йарас тĕлĕшпе кирлĕ пек мерăсем йышăнма хушнă.

Елĕк райкомне парти организацинче партилĕ пропагандă ĕçĕ мĕнле тăни çинчен пур пуçламĕш парторганизацисенче тата парти шкулĕсемпе кружоксенче те сÿтсе йавса, ку ĕçе тĕпренех лайăхлатса йарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма кирли çинчен кăтартса панă.

Елĕк райком çекретăрне Меценатăвă йулташа ПСК(б)П Обком бÿровĕн 1938 çулта апрелĕн 9 мĕшĕнче йышăннă решенине пурнăçлама хушнă.

ПСК(б)П райкомĕсен пур çекретарĕсене те парти вĕрентĕвне йертсе пырассине вăйлатса йама йушнă.

ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн Елĕк райкомĕ партилĕ пропагандăпа агитаци ĕçне мĕнле йĕркеленине пĕр уйăх иртнĕ хыççăн тепĕр хут тĕрĕслемеле.

Пĕр çул хушшинче 4 çекретар

ИШЛЕЙ „Автогигант", Ойкасси йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ Оччă" колхозсенчи комсомол организацисем ПСÇЛКС Тенкомĕн 5-мĕш пленумĕпе ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн 3-мĕш пленумĕн решенисене пурнăçлассипе лайăх ĕçлеççĕ.

„Автогигант" колхозри организацинче йанвар уйăхĕнче 4 комсомолец пулнă пулсан, халĕ 22 комсомолец. Кунта политзаңатисем те йĕркелĕ пулса иртеççĕ.

„Автогигант", „Хĕрлĕ Оччă" колхозсенчи комсомол организацисем Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава лайăх парнесем хатĕрленипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ. „Автогигант" колхозри комсомолĕцсем: Аннă Терентйевăпа Николай Горбунцов кирпĕч çапас ĕçре нормăна 140—150 процентшĕр тултараççĕ. Çавăнпа пĕрлех, комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленес ,майпа социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йаман-ха. Комсомол райкомĕ те ку ĕçе кирлĕ пек йертсе пыман.

Политвĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ А. Леонтйев йулташ комсомол организацисенче политвĕренÿ ĕçне йĕркелессишĕн тăрăшман. Вăл комсомол организацисене кайса конкретлă пулăшусем пани пулман. Йулашки вăхăтра комсомол райкомĕн бÿро членĕ Д. Михайлăва йулташ тăрăшнипе комсомолăн хăшпĕр организацисенче политвĕренÿ ĕçне йĕркеленĕ, Çапах та политвĕренÿ ĕçне йĕркелесе çитернĕ теме çук-ха. 37 политшкултан 16 шĕ кăна ĕçлеççĕ. Пропагандиссемпе çеминарсем туса иртермеççĕ.

Нумай пулмасть-ха ПСÇЛКС Ишлей райком пленумĕнче ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн çекретарĕ Арзамасцĕв тата комсомол обкомĕн бÿро членĕ Петеңникăв йулташсем пулчĕç. Вĕсем комсомолăн районри организацин çитменлĕхĕсем çинчен каласа пачĕç.

Анчах кунта çакна каламала: ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕнчен килнĕ йулташсем комсомол райком çекретарне Пушкин йулташа тÿрех ĕçрен хăтарасси çинчен ыйту лартрĕç. Арзамасцĕвпа Петеңникăв йулташсем Ишлей районне пĕрре килсе курнипех райком çекретарне ĕçрен хăтарас ыйтăва лартни пирĕншĕн килĕшÿсĕр пек туйăнать.

Райком çекретарĕсене нумай улăштарса пыни комсомол организацине çирĕплетме памасть. Пĕр çул хушшинче 4 çекретаре çитнĕ Паллах, çекретарсем çакăн пек улшăнса тăни комсомол организаци ĕçне пушшех те йапăхтарать

— Епĕр Пушкин йулташа темиçе хут та „асăрхаттарнă",—тет Обком çекретарĕ Арзамасцĕв йулташ. Анчах вырăна туххса пулăшни пулман. Çамрăк кадрсене кабинетра ларса „асăрхаттарни". вырăна тухса пулăшманни ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ çителĕксĕр ĕçленине, кадрсене пĕрмай улăштарма васканине кăтартать.

Гер. Шчербаков.

Виççĕмĕш квартăлта лайăхрах ĕçлемеле

Республикăра 3-мĕш квартăлта 19.284 пин тенкĕ укçа пухмала Çак шутра обйазатеңнăй йĕркепе пухмалли укçасем (налог тата ытти те) 13 204 пин тенкĕ, ирĕклĕ тÿлевсем (зайом, вкладсем, ирĕклĕ страховани) 6 080 пин тенкĕ кĕреççĕ. Виççĕмĕш квартăла кĕнĕрение 45 кун иртрĕ. Çак тĕле илсен, финанс планне çурринчен кайа мар тултармала пулнă. Анчах та укçа-тенкĕ пухасси чăтма çук йапăх пырать. Налог тÿлевĕсене 3-ш квартăлта 9 574 пин тенкĕ пухмала. Пĕр уйăх та 10 кун хушшинче 1.985,6 пин тенкĕ пухса, плана 20.7 процент çеç тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас ĕç чăтма çук йапăх пырать. Иртнĕ вунăкунлăхра малтанхи вунăкунлăхринчен те сахалтарах пухăнчĕ. Налогсем тăрăх пухăнмалли укçасене пухса çитерменни чылай, уйрăмăнах йединоличниксем çинче парăм нумай тăрать.

Тÿрех калас пулать, хăшпĕр районсенчи финанс пайĕсенчи тата йалсоветсенчи работниксем укçа-тенкĕ мĕнле вырăнта тăнине анланса илме тăрăшмаççĕ. Вăрмар районĕнче виççĕмĕш квартăлта 406 пин тенкĕ пухмала. Пĕр уйăх та 10 кун хушшинче 48,1 пин тенкĕ пухса плана 11,8 процент анчах тултарнă. Шăнкăртам, Кувакинă, Куславкка, Канаш, Хĕрлĕ Чутай. Ишлей, Йĕпреç, Вăрнар, Турхан, Тутаркас, Çĕрпÿ, Шăмăршă, Тăвай районĕсенче те ĕç питĕ йапăх тăрать. Ку районсем йĕнĕпе илсен, квартăл планне 11 процентран пуçласа 16,3 процента çити çеç тултарнă.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕнче финанс оргăнĕсен ĕçне вăйлăн критиклерĕç, тивĕçлĕ хак пачĕç. ЧАССР Финанс Халăх Комиссарĕ Захарăвпа унăн заместителне Срибныйа ĕçрен кăларнă. Вĕсем финанс оргăнĕсенчи хăшпĕр работниксем питех те ответсăр ĕçленипе килĕшсе тăнă, ĕçре çирĕп йĕркелĕх шĕн кĕрешмен. Çакна пула финанс оргăнĕнчи ĕç дисциплини питĕ йапăхса кайнă. Финанс планĕ уйăхран уйăха, квартăлтан квартăла тулса пыми пулчĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш квартăл планĕсене тултарайман, виççĕмĕш квартăл планне уйăх çурăра 20,7 процент çеç тултарнă.

Ĕç çакăн пек пыни финанс оргăнĕнчи хăшпĕр руководителĕсем питех те пысăк ĕç çине çиелтен кăна пăхнине пĕлтерет. Финанс планне тултарма пур условисем те пур çинчен, ăна тултармасăр тăракансем тăшманла ĕç тăваççĕ.

Финанс планĕ пур тÿлевсем йĕнĕпе те тулса пымасть. Йединоличниксем йĕнĕпе иртнĕ çулта пухса пĕтермеле пулнă тÿлевсене 4 мĕлйун тенкĕ йахăн халĕ те пухса пĕтермен. Çак укçана пĕтĕмпех вăхăтра пухса çитерме кирлĕ условисем çителĕклĕ пулнă. Анчах та тивĕçлипе ĕçлемен. Пирĕн ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче „Йединоличниксен хуçалăхĕсем çине хунă йалогсемпе ытти обйазательствăсем çинчен" йышăннă постановленине тĕрĕс пурнăçласа пымала.

Хăшпĕр йалсоветсенчи работниксем укçа-тенкĕ пухассипе тата хатĕрлевсем йĕнĕпе йатарласа ĕçлекенсем пур тесе, çак ĕçрен пĕтĕмпех айакра тăрса йулма пăхаççĕ. Кун пек ĕçлени питĕ сийенлĕ. Йалсовет членĕсен тата уйрăмăнах йалсовет председателĕсен финанс инспекторĕсене ĕçре активлăн пулăшса пымала. Укçа-тенкĕ пухас ĕçе пĕтĕм актива хутшăнтарни кирлĕ. Районсенчипе хуласенчи финанс пай пуçлăхĕсен, налог инспекторĕсемпе агентсен 3-мĕш квартăл планне пур тÿлевсем йĕнĕпе те вăхăтра тултарассишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнмала. Пур йалсоветсенче те финанс çекцисемпе комсодсен ĕçне вăйлатни, финанс активĕн ретне хутшăнтарни кирлĕ. Финанс пай пуçлăхĕсен, инспекторсен, йалсовет председателĕсен налог агентне ĕçре пулăшас пулать. Налог агенчĕ мĕнле ĕçленине сăнасах тămала.

Налог агентне питĕ хисеплĕ тата ответлă ĕç шанса панă. Вăл государствăн саккунĕ тăрăх халăхран укçа пухать. Налог агенчĕсен пурин те хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымала. Массă хушшинче тата массăпа пĕрле хĕрÿлĕн ĕçлемеле. Йалсовет, колхоз правлени, партипе комсомол организацийĕсемпе пĕрле ĕçлемеле, кирлĕ пулсан вĕсенчен пулăшу ыйтмала.

Финанс ĕçĕнче комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксем нумай. Пĕтĕм çĕршыври çамрăксем Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине пысăк çĕнтерÿ тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешĕве тухрĕç. Финанс ĕçĕнчи çамрăксен малтанхи парни—финанс планне пур тÿлевсем йĕнĕпе те тултарни пулмала. Финанс планне çуккенех тултарассишĕн йубилей уманхи ăмăртăва сарса йамала.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. ЗОЛОТНИКОВ.

Партилĕ пропагандă ĕçне тĕпрен лайăхлатмала

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ иртнĕ кунсенче партилĕ пропагандă ĕçĕ Елĕк районĕнче мĕнле тăни çинчен йатарласа решени йышăнчĕ. Обком хăйĕн решенинче Елĕк районĕнче партилĕ пропагандă ĕçĕ çителĕксĕр тăнине палăртрĕ.

Елĕк районĕнче 13 кружок шутланать. Ку кружоксенче 154 çын. Анчах çак кружоксене Елĕк райкомĕ ПСК(б)П Обкомĕ кăтартнă пек организацилемен. Чылай коммунистсен заңатисене 10—17 километр таран район центрне çÿремеле. Акă, парти кабинетĕнче парти историне вĕренекен кружокра йалти коммунистсем тăраççĕ. Соловйов йулташ район центрĕнчен 12 километртра, Çидăрăвă йулташ 15 километрта, Белов йулташ 17 километрта т. ыт. пурнаççĕ. Паллах ку коммунистсем заңатисене час-часах çÿреймеççĕ. Февралĕн 15-мĕшĕнче заңатире 5 çын, мартăн 16-мĕшĕнче 4 çын, апрелĕн 8-мĕшĕнче 3 çын, апрелĕн 25-мĕшĕнче 2 çын, майăн 28-мĕшĕнче 4 çын çеç пулнă. Çав вăхăтрах кружока 13 çын пымала. Паллах ку кружока йала куçармала.

ПСК(б)П райкомĕ çумĕнчи политграмăтă кружокĕнче те çавăн пекех вĕренекенсен йалан 7—8 километра заңатисене çÿремеле. Кружок руководителĕ Меценатӑвă йулташ хăш чухне заңатисене йала кайса иртерет, çавах та заңатисем район центрĕнче ытларах пулса иртеççĕ.

Райĕçтăвком çумĕнчи парти историне вĕренекен кружокра 1938 çулта 3 заңати кăна иртернĕ. Март уйăхĕнчепе кружок вуççех ĕçлемест.

Райкомăн штатлă пропагандисĕ Василйĕв йулташ та хăйĕн ĕçĕпе ытти пропагандиссене пример кăтартаймасть. Вăл 2 кружок йертсе пырать. Парти историне вĕренекен кружокра йулашки заңати августăн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Политграмăтă кружокĕнче июнь, июль уйăхĕнче пĕр заңати те ирттермен. „Июнь уйăхĕнче суйлав иртерни, июль уйăхĕнче епĕ отпускăра пулнă"—тет Василйĕв пропагандис. Василйĕв йулташа агитколлектив руководителĕ пулса ĕçлеме хушнă. Анчах суйлав иртнĕ хыççăн вăл агитаторсемпе те ĕçлеме пăрахнă.

Кружоксенче вĕренÿ пахалăхĕ çителĕксĕр. Вĕренекенсем килте вуласа вĕренеççĕ, пропагандиссем те вĕсене кĕнекепе ĕçлеме вĕрентмеççĕ. Елĕкри йалпо çумĕнчи парти истори кружокне райком инструкторĕ Нилăв йулташ йертсе пырать. Августăн 7-мĕшĕнче заңатине 6 çын çеç пынă, 5-шĕ ним сăлтавсăрах пыман. 6 çынран пĕр Карикăв йулташ кăна заңатине хатĕрленсе пынă. Çавăнпа та заңатире 2 çын çеç тухса каласнă, ыттисем ним шарламасăр ларнă. Йулашкинчен: „Ку темăна тепĕр хут вĕренмеле", тесе йышăннă.

1938 çулăн малтанхи çур çулĕнче парти историне вĕренекен 4 кружокра 31 заңати иртермен. Вăл шутран пĕр райĕçтăвком çумĕнчи кружокра 17 заңати пулман, МТС-ра 5 заңати пулман т. ыт. те.

Пропагандиссене тата вĕренекенсене пулăшса тăрас ĕçре парти кабинечĕн пысăк вырăн йышăнмала. Парткабинет пуçлăхĕ Казаков йулташ вĕренекенсене килте вуласа вĕренме пулăшас ĕçе йĕркелемен. Консуңтаци ĕçне те начар лартнă.

Парти кабинечĕн тепĕр çитменлĕхĕ вăл—парти активне ĕçе хутшăнтарманни. Казаков йулташ пур ĕçе те хăй туса пыма тăрăшать. Çур çул хушшинче тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе Казаков йулташ хăй 12 доклад тунă.

ПСК(б)П Елĕк райкомĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене иртернĕ хыççăн политикăлă агитаци ĕçне вăйсăрлатнă. Чылай пуçламĕш парторганизацисенче, колхозсенче агитаторсем ĕçлеме чарăннă. Вырăс Сорминче суйлав вăхăтĕнче 14 агитатăр ĕçленĕ, халĕ 7 агитатăр кăна колхоз бригадисенче ĕçлеççĕ.

ПСК(б)П Елĕк райкомĕн, çавăн пекех ытти райкомсен те Обком кăтартса панă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтермеле, партилĕ пропагандă ĕçне тĕпрен лайăхлатмала.

Пĕр кунра 4000 тенкĕ пухрĕç

Кăшаркасси йалсоветĕнчи (Çĕрпÿ р.) налог агенчĕ Петр Çеменăв йулташ финанс çекци членĕсемпе пĕрле йалсоветри „Пионер" тата Буденный йачĕпе тăракан колхозсенчи пур бригадăсенче те 1938 çулхи йалхуçалăх налогĕ çинчен каласа ăнлантарчĕ. Çакăн хыççăнах йалсоветри Илйа Никитин, Николай Галирун, Порфири Макарăв, Çтепан Йегорăв, Михаил Харитонăв колхозниксен хуçалăхĕсем 1938 çулхи налог укçине 100 процентчĕпех парса татрĕç. Йалсоветчĕпе августăн 9-мĕшĕнче çĕнĕ налог укçине 4000 тенкĕ пухрĕç. Халĕ налог укçи пухас ĕç вăйлансах пырать.

А. Иванов.

мацисем, Грузири вăрттăн тухса тăракан „Брдзола" журнал, иртнĕ çулăн вĕçĕнче палăрнаскер, тата çитменнине „Искра" хаçат хăй те Баку хулинче пичетленнине кăтартса паракан хыпарсем пуррине агентурă пĕлтерет, çавăнпа пĕрлех çав вăрттăн производствăн ĕçлекĕлĕ участникĕсен шутĕнче епĕр шыракан, Демитрашвили йатлă хушаматпа пытарăнса пурăнакан Владимир Кецховели те пур".

Ладо Кецховели, опытлă конспиратăр пулса, хăйне жандарм сыхласа çÿренине сиснĕ, вара типографине урăх хулана куçарас шутпа, ĕçлеме чарать.

Анчах вăл кайма шутланă хуласенчи парторганизацисем ăна тивĕçлĕ пулăшу пама пултараймян. Вара Ладо Баку хулинчех хватер çеç улăштарма шухăшланă. Çапах та ăна нумай тытăнса тăма май пулман. 1902 çулхи çентаберĕн 2-мĕшĕнче Кецховелине арĕсленĕ.

Ладо Кецховели тĕрмере те, ирĕксĕр пекех кĕрешĕве пĕр кунлăха та чарса лартман.

Çав вăхăтра жандармсем Кецховели арестантăн йунне ĕçме васкавлăн хатĕрленнĕ.

Жандармсем Кецховелине тул йенчен вĕлерме хатĕрленнĕ. Кецховели тăракан камерăна чÿречерен пăшалпа пенĕ салтак начаңствă хушнипе пурнăçлани лайăх курăнать.

Кецховели ашшĕ Тифлис губернаторĕ патне çырнă прошени хăй çине çаврăнтарса пăхтарать. Вăл çапла çырнă: „Ман патна манăн Владимир ывăла политикăлла ĕç пирки Тифлисри Метех тĕрминче ларнă çĕрте вĕлерни çинчен хурлăхлă хыпар çитрĕ.

Çавăнпа та сирĕн превосходителствăна администрацине вилйни ÿтне христианствă йĕркипе пытарма май пама хушса распорйажени тума тархаслатăп."

Кецховелин ашшĕ тархасласа ыйтнине влаççем хирĕçленĕ. Ладо Кецховелине вĕсем вăрттăн пытарнă.

Тифлиспа Баку рабочийĕсене хăйсен йуратнă руководителне тискеррĕн вĕлерни питĕ тарăхтарса йанă.

Вĕсем Ладо Кецховели йатне йалан асра тытса тăраççĕ. Çак йĕркесене çыракана 1904 çулхи кĕркуншерен пуçласа 1905 çулхи çуркуннеччен Кавказра ĕçлемеле пулчĕ. Ун чухне Бакури малта пыракан рабочисем Кецховелин ытармала мар кунçулне татакан палачсем çинчен каласма тапратсан, вĕсен куçĕсем мĕнле тарăхупа, мĕнле таврăру хайарлăхĕпе тулнине, вĕсен чышкисем чăмăртаннине час-часах курма пулатчĕ.

Партин Бакупа Тифлис хулисенчи комитечĕсем Кецховелине вĕлернĕ хыççăн кăларнă прокламацисенче çапла каланă: „Йулташсем, епĕр сире çав паттăрлă бойецăн тĕлĕнмеле ĕçĕсем çинчен нумай каласа пама пултаратпăр, анчах ку ĕçе ытларах телейлĕ вăхăт киличчен хăвармала пулать".

Çав телейлĕ вăхăт килчĕ. Халăхăн чи лайăх çыннисем йухтарнă йун сайа каймарĕ. Ленин—Сталин партийĕ чи малтан Кецховели пек паттăр çирĕп тата хăравçăсăр бойецсем пулнипе çĕнтерчĕ. Çакă харсăр революционерăн сăнлăхĕ пирĕн çамрăксемшĕн пример, социалисăм ĕçне вĕçĕмсĕр парăннипе хамăрăн тăван çĕршыва сыхлассинче, Ленин—Сталин ĕçĕ пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерессишĕн кĕрешессинче хастарлăха, хăйулăха, шиксĕрлĕхе тата харсăр паттăрлăха кăтартакан пример пулса тăтăр.

Ц. Зеликсон—Бобровская.

Испани халăх çарĕн журналĕ

Пирĕн умра Испани çарĕн „Нуэстро Эхерсито"—„Пирĕн çар" йатлă журналăн малтанхи икĕ номерĕсем выртаççĕ. Пĕрремĕш номерĕ—1938 çулти апрелшĕн, иккĕмĕшĕ—май тата июль уйăхĕсемшĕн.

Çакă икĕ кĕнекере нумай материал пухса кăларнă. Паллă командирсен, комиссарсен статйисен, поетсен сăввисем. Паха ÿкерчĕксем республикăн паттăр çарĕн пурнăçĕнчи пур йенсене те çутатса кăтартаççĕ. Статйасем, заметкăсем, сăвăсем пурте тăван çĕршыва тарăннăн йуратни, республикăна таса çĕрне фашисла варвăрсем пырса тапăннинчен сыхласа тăма хатĕрри çинчен калаççĕ.

„Епĕр, хамăрăн тăван çĕршыва сыхласа хăварассишĕн кĕрешсе, çавăнпа пĕрлех пĕтĕм прогрессивлă етемлĕх ĕçĕшĕн кĕрешни пирĕншĕн тата пирĕн пĕтĕм халăхшăн чи аслă чыс пулса тăрать",—тесе калать „Нуэстро Эхерсито" журналăн умстатйи.

Республикă çарĕн нумай пулмасть лартнă генераңнăй комиссарĕ Осорио Тафаң йулташ çапла çырать:

„Мана генераңнăй комиссара лартнăранпа епĕ çакăн çинчен кăна шухăшлатăп: пирĕн хĕçпăшал çĕнтерни Испани халăхне ĕçлеме анлă майсем патăр, ирĕклĕх тата телейлĕ пурнăç патăр, ăна йутçĕр çинчен килнĕ тăшмансене експлоатацилес тата вĕсем тапăнас хăрушлăхран сыхласа хăвартăр. Анчах çавна тума Испани халăхĕ пĕрлĕхлĕ пулни кирлĕ. Çавăн чухне кăна вăл çĕнтерме тата çĕнтерÿ ырлăхне курма пултарать.

Дисциплинăна тĕреклетес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса пымала, çамрăк бойецсене вĕрентсе кăлармала, вĕсен куңтуралăхне ÿстермеле, политикăлă пĕлÿне хăпартмала, бойецсемпе командирсем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетмеле. Пирĕн чи кирлĕ пуйанлăх вăл—çынсем пулса тăраççĕ, çавăнпа пирĕн кашни бойец çине питех те тимлĕн çаврăнса пăхмала тата уншăн тăрăшмала. Çакна пирĕн нихăçан та манма йурамасть".

Сантйаго Аңварес комиссар ĕçĕнчи опыт çинчен каласа парать.

„Вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк,—çырать вăл,—пирĕн çарти комиссарăн ĕçĕ. Кунта сăмах халăх çарне никам çапса аркатайми вăй туса хурасси, ăна сутăнчăксемпе шпионсенчен тасатасси, ăна техникă тĕлĕшĕнчен пирĕн халăх хăйĕн кунçулĕн хуçи пулса тăриччен ăнăçлăн кĕрешме пултаракан тăвасси çинчен пырать".

Комиссарăн, паллах, командир ĕçне тума пăхмала мар, анчах хăйĕн чаçĕн пурнăçĕн пур йенĕпе те унăн интересленмеле. Пуринчен малтан унăн бойецсене политикăлла воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлемеле. Аңварес çакна пăлăртать: Гвадалахара фронтĕнчи, Харамари, Брунете патĕнчи, Белчите патĕнчи мухтавлă çапăçусенче комиссарсем бойецсене хавхалантарса, çине тăрса ĕçлени нумай пулăшрĕ, вăл çапăçусенче республикăнĕсем çĕнтерчĕ.

5-мĕш корпус командирĕ подполковник Енрике Листер командир ĕçĕсем çинчен çапла çырать:

„Ударлă çар туса хума мĕн кирлĕ? Çарăн тĕп тĕл елеменчĕ çын пулса тăнине шута илмеле. Пирĕн пуçарулă, вĕренсе хăйсен пĕлÿлĕхне ырми-канми хăпартас хаваслӑхпа çунакан бойецсем пур. Пирĕн дивизисенче, корпуссенче шкулсем пур. Анчах та, пуринчен малтан кашни командир хăйĕн бойецĕсене лайăх пĕлсе тăни кирлĕ. Командир хăйĕн бойецĕсенчен кашнин уйрăмлăхĕсене тĕплĕн пĕлсе тăрсан çеç çапăçма пултаракан кадрсем хатĕрлеме пултарать. Вăл вара вĕренме чи пултарулă, хăйсем республикăна чĕререн парăннине ĕçре кăтартнă бойецсене йама пултарать.

Командирăн йаланах бойецсене паттăрлăх примерне кăтартмала. Йăвăр кунсем çывхарса килеççĕ, ун чух пирĕн хамăрăн оборонă министрĕн хушăвĕсене пурнăçламала: „Пирĕн çарăн кашни дивизине ударлă чаç туса хумала".

Паллă специалиссем çырнă чылай статйасенче вăрçă тактикипе стратегин, авиаци т. ыт. тĕрлĕ ыйтусене çутатса панă. Подполковник Хоакин Алонсо генераңнăй штаб ĕçĕсем çинчен, Хосе Валле капитан—авиацири çĕнĕ ĕçсем çинчен, çулйĕре курмасăр пелсе вĕçесси çинчен т. ыт. те çыраççĕ. Антонио Кордон полковник артиллерипе çуран çар ĕçĕсене çыхăнтарса пырасси çинчен çырать.

Танксемпе тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе вăрçăра усă курассине майлаштарасси çинчен çырнă статйа Испани вăрçинчи чылай опытсене илсе кăтартать. На туплени тунă вăхăтра республиканĕцсем танксене çапăçăва артиллери пулăшăвĕсĕрех йанă пирки нумай çухатусем тунă. Автăр танксене артиллери тата çуран çар пулăшнипе çеç çапăçăва кăларса йама сĕнет.

Планелйес доктăр çарти санитари чаçĕсен ĕçĕсем çинчен, подполковник Фернандес, Лерена фронтри фортификацилĕ ĕçсем çинчен çырать.

„Писателсем тата вăрçă" йатлă статйа Испани писателĕсем, художниксем, поетсем, ученăйсем Испани халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласа парать.

Пăлхав пуçланнă хыççăн малтанхи кунсенче Парижрен Ирана фашисла пăлханçăсене хирĕç кĕрешме художник Херасси (халĕ республикă çарĕн майорĕ) тата Бенавидес писател пынă. Дуран пианист васкавлăн ройале пулеметпа улăштарнă, Гарфиас поет Андалузи фронтĕнче пĕр çулталăк комиссар пулса пурăннă, кайран Барçелонăна пынă та халĕ каллех хăйне фронта йама ыйтать. Апарисио поет паллă командирĕн—Кампесинон чаçĕсенче комиссар пулса ĕçлет. Петере поет партизансен отрйачĕсенче пулса çапăçать.

Журнал кинофиңмсем çинчен çырнă статйасем валли те вырăн тупать. Вăл „Марçелйозă" фиңм пирки реценçи парать, „Ленин в Октябре" йатлă совет фиңмне пысăк хăмăлпа мухтать. Кунпа пĕрле фиңмăн пĕр сыпăкне, Ленинпа Сталина пĕрле кăтартакан сыпăка илсе кăтартнă. Журнал çĕнĕрен тухнă кĕнекесем—„Мадрид пирĕн" „Интернационаллă бригадăсемпе вăсем" т. ыт. çинчен те реценçисем пичетлет.

Журналта пичетленнĕ статйасемпе материалсем пурте Испани халăхĕ фашисла пусмăрлăхсене çĕнтерессине пĕр иккĕлленмесĕрех шанса тăнине кăтартаççĕ.

Испанири фронтсенче

Августăн 14-мĕшĕнче хĕвелтухăçри фронтра пăлхавçăсем Балагер патĕнчи Сегре шывĕн кĕперĕ районĕнчи республиканецсен позицисене улттă хут атакăланă. Республиканецсем вăл атакăсене пурне те сирсе янă. Пăлхавçăсем 300 çын ытла çухатнă. Ебро юханшыв районĕнче интервентсен чаçĕсем Пандос тăвĕсенчи (Гандеса сывăхĕнче) республиканецсен позицисене çĕнĕрен атакăланă. Республиканецсем тăшман атакисене пĕтĕмпех сирсе янă. Фашиссен çухатăвĕсем питĕ пысăк.

Центрти фронтăн Естремадура участкинче, Гвадиана юханшывĕн районĕнче, пăлхавçăсемпе интервентсен чаçĕсем, авиаципе тата танксемпе пысăккăн усă курса, Вальдекабальйероса çавăрса илнĕ. Кабес дель Буей таврашĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Республиканецсен çарĕсем çав йалтан кăнтăрхĕвелтухăç йенне пăраннă.

Левант фронтĕнче, Теруельрен хĕвеланăçнеле, республиканецсем паттăр çапăçса хăш-пĕр пăллă высотасене çĕнтерсе илсе, малала ăнăçлăн куçса пыраççĕ.

Кăнтăрти фронтра улшăнусем çук.

(ТАСС).

Призыв çурчĕ хатĕр

Чăваш АССР Çар Комиссариачĕ 1917—18 çулсенче çуралнă гражданинсене Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар ретне илмели черетлĕ призыв пулассине çинчен приказ кăларнă хыççăн, Канашри Çар Комиссариачĕ çумĕнчи призыв участки призыва хатĕрленме пуçларĕ. Призыв пулмалли пÿлĕмсене илемлетсе хатĕрленĕ. Кунта чечексем, плакатсем, партипе правительствă руководителĕсен портречĕсем пур.

Призывниксене вальли йатарласа хĕрлĕ кĕтес усăççĕ.

Канаш райĕçтăвкомĕнчи Çар пайĕ районри призывниксемпе вăйлăн ĕçлет. Трахомăлă призывниксем çукпа пĕрех.

Çавăн пекех кăçал Çар пайĕ тăрăшнипе хут пĕлмен 9 призывнике пуçламĕш шкул программипе, хут сахал пĕлекен 156 призывнике туллимар вăтам шкул программипе вĕрентсе кăларнă.

Арк. Кириллăв.

Шкул вĕренÿ çулĕ умĕн

Тăрмăшри (Йелчĕк р.) туллимар вăтам шкул 1938—39 вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илет.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче 8 клас пулаť, 235 ача вĕренмеле. Халĕ шкул çуртне йусанă, 5 кăмака, 8 парта, 3 доска йусаттарнă. Çĕнĕрен форточкăсем тутарнă. Шкулăн çуртне çуса тасатнă, партăсене, сĕтел-пукансене вырнаçтарса лартнă. Çĕнĕрен 10 венски пукан илнĕ. Партипе правительствă руководителĕсен сăнĕсем вальли 22 рамкă тутарса кантăк лартса хунă. Ачасен библиотеки вальли 193 кĕнеке илнĕ.

Вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене—тетраťсем кашни ача вальлийех 4-шар, пĕрер перо илсе хатĕрленĕ. Калас пулаť, районти суту-илÿ организацисем учебниксем, хут, кăранташ, перо т. ыт. те вăхăтра тата çителĕклĕ кÿмеççĕ.

Шкула 220 кубла метр вутă кирлĕ. Вутă кÿрес ĕç йулса пыраť-ха. „Красное знамя“, „Знамя“ колхозсем пайанхи кунччен те турттарма тытăнман.

Халĕ кĕркуннехи тĕрĕслеве хăвар ă ачасемпе учительсем пĕрер хутчен консультацисем туса ирттернĕ. 16 ачаран 12-шĕ тĕрĕслевре пулма хатĕрленсе çитнĕ. Вĕсем августăн 21—27-мĕш хушшинче тĕрĕслевсенче пулаççĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çуле пуçланичченех шкул физикăпа хими приборĕсене çителĕклĕ туйанаť.

Ф. Бельайĕв.

Малтанхи консультацисем

Тивĕшри (Ишлей р.) вăтам шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе тимлĕн тытăнчĕ. Шкул çуртне йусанă. Хут, кăранташ, перо, чернил т. ыт. те çителеклĕ илсе хатĕрленĕ. Шкулăн 11 кăмака, вĕсене пурне те йусаттарнă. Кашни класрах партăсене, доскасене йĕркелесе вырнаçтарнă. Çтена çумне географи картисене кăларса çакнă.

Учительсем кашни кунах кĕркуннехи тĕрĕслеве хăварнă ачасене пухса консультацисем ирттереççĕ. Çавăн пекех тата кăçал вĕренме кĕрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсене пухса 5 хут калаçу туса ирттернĕ. Шкулăн вутă 260 кубла метр кÿмеле, пайанхи куна 160-шне кÿнĕ, ыттине çак кунсенчех кÿрсе çитереççĕ.

Çитес вĕренÿ çулĕнче 335 ача вĕренмеле. Вĕсене вĕренме учительсем çителеклĕ.

И. Волкăв.

Учебниксем çителĕклĕ

Шăхаленчи (Шăхасан р.) пуçламĕш шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме тытăннăранпа çĕнĕрен 5 партă илнĕ. Ачасем вальли учебниксем, тетраťсем т. ыт. çителĕклĕ илсе хунă.

С. Фомин.

Кунта хатĕрленмеççĕ

Иртнĕ çулта Мильутинри хăма çураман савăтпа Акшкульти вăрманпромхозĕнче ĕçлекенсен 240 ача шкулта вĕреннĕ пулсан, кăçал вĕсен йышĕ нумай ÿснĕ. Çавна шута илсе Шупашкар районĕнчи çутĕç пайĕ кăçал 7 çул вĕренмели шкул уçма палăртнă.

Анчах, çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленессипе кунта никам те ĕçлемест. Шкул çуртне йусаман. Партăсем, учебниксем çитмеççĕ. Учительсем тата шкул директорĕ çук.

Ф. Данилăв.

Германи вăрçа хатĕрленет

Фашисла Германи урса кайсах вăрçа хатĕрленнĕ пирки йут çĕршывсенчи пичет пит те канăçсăрланса çыраť.

Германи хĕвелтухăç Пруссипе Германи Силезин территорийĕ çинче тăвакан çар укрепленисем Польша пичетне ванаç памаççĕ.

Англи пичечĕ пĕлтернисем тăрăх, Германи çарне призывпа чĕнсе илнисен шуче халех 750 пин çынна çитет ентĕ. Чехословаки чикки çывăхĕнче, Глаць районĕнче 100 пин çынла çар пухса таратнă, унăн командуйушчийĕ—генерал Арним. Çак генерала хăй менле шутланă çавăн пек тума права панă.

Францире „Фигаро“ хаçат çапла çыраť: „Германире васкавлă çар ĕçĕсем туса ирттереççĕ. Врачсемпе санитарсене мобилизациленĕ. Çар службине йурахла çынсене мобилизацилеççĕ не вĕсем влаçсен распорйаженийĕнче шутланса тăраççĕ. 65 çултан иртмен пур нимеççене те Германирен тухса кайма чарнă“. Çак хатĕрленÿсем, хаçат сăмахĕ тăрăх, пĕтĕм Германи халăхне хыта хумхантараççĕ. Реквизицисем тунă май нимĕç хресченĕсем хытă канăçсарланаççĕ. Хресченсен сăмахĕсем тăрăх, çав реквизицисем 1914 çулти событисене аса илтереççĕ.

Францири компарти хаçачĕ „Йуманите“ çапла çыраť:

„Германи çар ĕçĕсем туни вăл—вăйпа усă курассипе йунаса тăвакан ирĕçер шантаж пулса тăраť. Апла пулсан та, вĕсем Франципе Чехословакишĕн чăн-чăн хăрушлăх пулса тăраççĕ“.

(ТАСС).

Англири ĕçсĕрлĕх

Çак çулхи июлĕн 18-мĕшне Англире ĕççĕр пурăнакансем 1.773 пин çын пулнă—пĕлтĕр çав вăхăт тĕлне ĕççĕр пулниччен 448 пин çын ытла. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ пир-авăр промышленнăçĕнче 73.000 çын, сăрт-ту промышленнăçĕнче 46.000 çын, строительствă промышленнăçĕнче —30.000 çын, хурçă шăратакан тата тимĕр тăвакан промышленнăçра—27.000 çын, çăм промышленнăçĕнче — 26.000 çын, машиностройени промышленнăçĕнче—22.000 çын таран ÿснĕ.

(ТАСС).

Районри радиовыставкă

КУСЛАВККА. Августăн 5-мĕшпе 10-мĕш хушшинче районра радиовыставкă пулса иртрĕ. Выставкăра районри çынсем тунă конструкцисем тата радио хатĕрĕсем нумай. Выставкăна тăратнă експонатсенчен паллăраххисем—Мăнçырми йалĕнчи Лебедĕв конструкциленĕ 3 лампăлă приемник тата Кусиарти вăтам шкулта вĕренекен ача конструкциленĕ 2 лампăлă приемник.

Выставкăна пионерсем, рабочисем, колхозниксем, служащисем нумай пырса курнă. Вĕсем радиона йуратакансен ĕçĕсене пăхса тухнă хыççăн хăйсен шухăшĕсене журнал çине çырса хăварнă.

Районри çыхăну пайĕ лайăх конструктăрсене премин пама укçа уйăрнă.

Г. Смирнов.

„Динамон“ çĕнĕ стадионĕ

МУСКАВ. (Хамăр корр.). Химкинри ... вокзалĕ тĕлĕнмеле илемлĕ. Кунта Мускав—Атăл каналĕ çинче çÿрекен пăрахутсем тăраççĕ. Вокзал тавра чечексем, илемлĕ курăксем.

Августăн 7-мĕшĕнче Химки патĕнче „Динамон“ çĕнĕ стадионĕ усăлчĕ. Стадионра малтанхи кун Хĕрлĕ Çар спортсменĕсем, командирсем ăмăрту ирттерчĕç.

Иев. Ефремăв.

Примерлă писмоносец

Матвейĕв В. Чурачăкра (Çĕрпÿ районĕ) 4 çул хушши писмоносецра ĕçлет. Вăл çырусене вăхăтра çитерсе парассишĕн тата хаçатсем сарассишĕн тăрăшаť. Иртнĕ çул йалта 194 подписчик пулнă, кăçал 343 подписчик.

Хальĕ Матвейĕв колхозниксем хĕрсе тырă вырнă çĕрте йе авăн çапакансем патĕнче час-часах пулаť. Кану вăхăчĕсенче колхозниксене хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсем çинчен вуласа параť.

К. Михайлăв.

Хамăн ывăлсемшĕн савăнатăп

Епĕр арăмпа иксĕмĕр те ватă çынсем ентĕ. Ватлăхра савăнăçла пурнăçпа пурăнма телей тивнĕшĕн хĕпĕртетпĕр. Ĕлĕкхи вăхăтра, патша саманинче, темĕн чухлĕ ĕçлесен те пурнăçа лайăхлатма май килместчĕ. Совет влаçĕ çеç пирĕн пек чухăн çынсене телейлĕ пурнăç çулĕ çине кăларчĕ.

Епе хамăн ывăлăмсемшĕн савăнатăп. Манăн икĕ ывăл, кĕçĕнни Федăр Инçетри-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронтра авиаци чаçĕнче службăра тăраť; асли—Алексей—Шупашкарта шоферта ĕçлет. Иккĕшĕ те партире тăраççĕ.

Федăр Инçетри-Хĕвелтухăçĕнчен çырусем йарса хĕпĕртеттерет, самольотпа отличнă вĕçни çинчен, парашутпа сикни çинчен çыраť. Хĕрлĕ Çара йурăхлă çын пулма пăхса ÿстернĕшĕн ашшĕпе амăшне тав тăваť. Ватă çынсемшĕн çакăнтан хисеплĕрехххи мĕн пултăр тата!

Епĕр хамăрăн тăван çĕршыва йуратаťпăр. Тăшмансем пирĕн йуратнă çĕршыв çине тапăнма шут тытсан епĕр арăмпа иксĕмĕр те хамăрăн ывăлсене тăван çĕршыв чиккисене хÿтĕлеме пиллесе йаратпăр. Аслă ывăл Алексей автомашинă çинчен броневик йе танк çине куçса ларĕ, Федăр самольотпа вĕçсе çĕкленĕ. Пирĕн паркатарлă Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕр çинче те, сывлăшра та, шывра та çĕмĕрсе тăкĕ!

Павел Йакăвлĕв.

Утар йалĕ, Вăрнар р.

Пахча-çимĕçсем хатĕрлесси

Шупашкарта пахча-çимĕçсемпе суту-илÿ тăвасси çителĕклĕ пымасť-ха. Республикăри пахча-çимĕç хатĕрлекен организаци—„Союззаготплодоовощь“ план тăрăх централизованнăй йĕркепе пахча-çимĕçсене 5.700 тоннă хатĕрлемеле пулнă. Августăн 10-мĕш телне хăйăр çеç 800 тоннă хатĕрленĕ, ытти культурăсене хатĕрлемен.

Децентрализованнăй йĕркепе помидор 8,8 тоннă, пыл 7,9 тоннă çеç хатĕрленĕ.

Суту-илÿ организацисен пахча-çимĕçсем хатĕрлессине хăйсем тĕллĕн сарса йарса, вăл пахча-çимĕçсемне суту-илÿ тума пурмайсем те пур. Анчах Чебторг ку ĕçпе хăйĕн умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртмен. Вăл паянхи куна магазинсем мĕн чухлĕ пахча-çимĕç хатĕрлесе сутнине те пĕлмест. Ку, паллах, Чебторг хатĕрлев ĕçне йĕртсе пыманни çинчен калаť.

Магазинсенче пахча-çимĕçсене кирек хăш вăхăтра та кирлĕ таран илме çук. Хăйăр пĕр кун сутаççĕ те пĕр кун çук. Помидор пачах çук.

Халĕ ентĕ арбузсем, дыньăсем пиçнĕ, анчах Шупашкарти магазинсенче вĕсене тупса илме çук.

Хатĕрлевпе суту-илÿ организацисен пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕçе лайăхлатса, ĕççыннисене кирлĕ таран пахча-çимĕç памала.

П. Тороней.

Комсомол йубилейĕ тĕлне

Ленинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле Чăваш государствă издательствинче çакăн пек художествăлă произведенисем пичетлесе кăларма палăртнă:

Çамрăк писательсемпе поетсем çырнă литература произведенисен сборникĕ, сборникре 10 пичетлĕ листа пулмала, ун вальли халь материалсем пухма пуçланă. В. Вишневскин „Пирĕн Кирăв“, Карацупăн „Паттăр пограничник“, В. Лебедĕв-Кумачăн „Йубилей йурри“, Н. Островскин „Хурçă мĕнле хĕрнĕ“, Гусĕвăн „Ужумри ача“, Ленинпа Сталин çамрăксем çинчен çырнă статйасен сборникĕ, комсомол уставĕпе программи, комсомолăн 3-мĕш сйесĕнче Ленин каланă сăмах т. ыт. пичетлевсе тухмала. К. Чулкăç „Çамрăк патриотсем“ йатлă калав çырнă.

Кунсăр пуçне „Сунтал“, „Ĕçхĕрарăмĕ“ тата „Хатĕр пул“ журналсем комсомол 20 çул тултарнă йубилей йачĕпе йатарласа уйрăм номĕрсем кăлараççĕ.

Йалпори çитменлĕхсем

ЙĔПРЕÇ. 1938 çулхи таварçавăрнăш планне тултарас, растратăсене пĕтерес, куллен кирлĕ таварсене ĕççыннисем патне вăхăтра çитерес тĕлĕшпе Çĕнĕ Чураш йалповĕ Туçи йалповĕпе ăмăртăва тухнă.

Анчах йалпосем ăмăрту договăрĕнче кăтартнисене пурнăçламаççĕ. Çĕнĕ Чураш йалповĕ çурçулхи таварçавăрнăш планне 94 процент çеç пурнăçланă, пай укçи пухас плана 42 процент, хатĕрлевсен планĕсене 26 процент çеç тултарнă. Çур çул хушшинче йалпоран 7 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă, кунта пурĕ те 1800 тенкĕ çеç тупăш илнĕ. Растратăсене пĕтермен. Йалпон халь растратă укçине 3 пин тенкĕ шыраса илмеле.

Йалпо лавкисене колхозниксене кирлĕ таварсене вăхăтра илсе килмеççĕ. Правлени председателĕ Алексеĕв йулташ çитменлĕхсене пĕтерес майпа нимĕн те тумасť.

Вишневский.

Страховкă укçи тÿлеççĕ

** Кĕтеснерти (Вăрмар р.) колхозниксем страховкă укçине тÿлеме тытăнчĕç. Йалсоветри активиссем Н. Данилăв, И Федăрăв, К. Архипăв, М. Çергейĕв йулташсем извешчени илнĕ кунах тÿлесе татрĕç.

Колхозри 5-мĕш бригадăн бригадирĕ Д. Çтепанăв страховкăпа пĕрлех налог укçине те тÿлесе татрĕ.

В. С. Алендеĕв.

** Трак районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем те страховкă укçине тÿлеме тытăнчĕç. Й. Йегорăв 26 тенкĕ тÿлерĕ, С Александрăв, В. Михайлăв йулташсем пĕтĕмпе тÿлесе татрĕç.

Йалсоветчĕпе илсен извешчение салатнă кунах 360 тенкĕ пухăннă.

Ф. Трофимăв.

Уйкас Кипек йалповĕ малта

ШĂХАСАН. Райпотребсойуз 1938 çулта хăй çине çăмарта пухма илнĕ обйазательствăна 86 процент тултарчĕ. Уйрăм йалпосем тăрăх илсен Йамаш йалповĕ 99 процент, Уйкас Кипек йалповĕ 102,7 процент тултарчĕç. Уйкас Кипек йалповĕнче çăмарта пухас ĕçре Çтепанăв йулташ тăрăшса ĕçлет. Вăл çăмарта пухма хăй çине илнĕ обйазательствăна 150 процентран кайа мар тултарассишĕн ĕçлет.

Çак вăхăтрах Чул Кăмака йалповĕ çăмарта пухма илнĕ обйазательствăна 70 процент çеç пурнăçланă.

Д. Иванов.

Кĕскен

100 путёвка илнĕ. Çĕрпÿри педучилищăна вĕренекенсене канма йака 100 путёвка илнĕ. Халĕ 2 смена канса килнĕ. Çак кунсенчех тепĕр 30 ача канма кайаççĕ.

И. Окунĕв.

5 пин тенкĕлĕх учебниксем. Шăхасан районĕнчи шкулсем валли çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланас умĕн райпотребсойуз 5 пин тенкĕлĕх ытла çĕнĕ учебниксем илсе килнĕ. Çавăн пекех тетраťсемпе кăранташсем те çителĕклĕ.

Д. И.

Çĕнĕ киоск. Маťшу йалповĕ (Шăхасан районĕ) Малтикас Шĕкĕр йалĕнче сăра, кăвас, морс сутмалли киоск уçрĕ. Кунта ĕçмелисемсĕр пуçне табак, пирус, спичкă та сутаççĕ.

И-в.

Çамрăк художник. Улатăрти художествă училищинче иккĕмĕш курсра вĕренекен Марков çуллахи каникул вăхăтĕнче чылай ескизсем хатĕрленĕ. Халь вăл пир çине çуллă сăрпа „Пионерсем лагерĕ“ йатлă илемлĕ картинă çырма тытăннă.

Г. Коньцев.

Çĕнĕ договăр тунă

Чăваш республикĕн çулйĕр бригади августăн 5-мĕшĕнче Мари республикĕн центрне—Йошкар-Олана кайрĕ. Бригадă августăн 11-мĕшĕнче Шупашкара таврăнчĕ. Бригадăра пурĕ 12 çын пулнă.

Пирĕн бригадă Мари республикĕнче пилĕк кун хушши пулса, унти çулйĕр строительствипе, çулсене мĕнле тытса усранипе, ĕç опычĕсемпе паллашнă, пирĕн Чăваш республикĕпе Мари республикĕ хушшинче тунă социалисла ăмăрту договăрĕ пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕсленĕ.

Çулйĕр строительстви йенĕпе 1938—1939 çулсенче те ăмăртса ĕçлеме килĕшсе, пирĕн бригадă Мари республикĕпе çĕнĕ ăмăрту договăрĕ туса çирĕплетнĕ.

Комбинат пульницин ĕçне камăн йĕркелемеле-ши?

Куславкка комбиначĕ çумĕнче уйрăм пульницă пур. Унта Куславкка посолкипе комбинатсăр пуçне тата çывăхри 6—7 йал çыннисем сывалма çÿреççĕ.

Пульницăна йавăр чирлисем йе аманнисем те пыраççĕ. Анчах ку пульницăра ĕçлекенсем йавăр чирлене çынсене нимĕнле пулăшу та параймаççĕ. Кунта икĕ врач кирлĕ, пайанхи кун пĕр врач та çук. Рабочи йавăр чирпе чирлесе комбинат пульницине пырсан:—Епĕр сана пулăшу параймастпăр, Сала пульницине кай,—теççĕ.

Комбинатри пульницăра сывату ĕçе начар пулни-не районти сывлăха сыхлав пайĕ аванах пĕлсе тăраť пулин те, нимле пулăшу та памасť.

А. Мошков.
Корнилăв.

Займ укçи пухас ĕç вăйланаť

ÇĔРПӰ. Çĕнĕ Сала йалсоветне кĕрекен „Красный бригадир“ колхоз колхозникĕсем займ укçи тÿлесе татма тăрăшаççĕ. Çак ерне хушшинче çĕнĕ займшăн 1134 тенкĕ укçа пухнă.

А. Иванов.

Тойкилт йалсоветĕнче (Тутаркас р.) Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне 10075 тенкĕлĕх çыранна. Халĕ йалсоветри займ уполномочĕннăйĕсем займ укçи пухас тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ. „Динамо“ колхозри уполномоченнăй Çтепан Анисимăв çĕнĕ займ укçине 1057 тенкĕ, Тельмăн йачĕпе тăракан колхозри уполномоченнăй Никита-Павлăв 1270 тенкĕ пухрĕç. Йалсоветчĕпе займ укçине пурĕ 5500 тенкĕ пухнă.

Г. Федăрăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чахоткă чирĕпе кĕрешесси

Чахоткă чирĕ ĕлĕкренпех етемлĕхе нумай сăтăр тунă. Чахоткăпа çемйере пĕр çын чирлĕ пулсан, вăл çемйери ытти çынсем те çав чирпе чирленĕ. Вара çавăн пек çемйере çуралнă ачасене те вĕсем чахоткăлă çуралнă тесе шанчăкăра кăларнă. Вĕсене пурăнасса шанман пирки çителĕклĕ пăхман.

Ашшĕ-амăшĕ чахоткăлă çынсем пулсан та ачасем çуралнă кунах чахоткăлă çуралмаççĕ. Чахоткă чирĕ,—сиксекен чир. Чахоткăн микробĕсем пур, вĕсене—кох патакĕсем, теççĕ. Ача амăшĕн чахоткă чирĕ питех те вăйланнă пулсан çеç ун пек амăшĕнчен ача чирлĕ çуралаť. Ача ашшĕн чахоткăпа чирлĕ пулсан та, ун пек ашшĕнчен ачасем сывах çуралаççĕ.

Килйышра чахоткăпа чирлекĕ çын пулсан, ачана çуралсанах ку чир йерсе кайма пултараť. Патша саманинче ĕçлĕлĕх начар, çитмен пурнăçпа пурăннă пирки, ача-пăча чахоткă чирĕпе сыхласа усрама питĕ йавăр пулнă.

Ачасем мĕн чухлĕ кĕçĕнрех, çавăн чухлĕ вĕсене чахоткă чирĕнчен хăтарма йавăр, вĕсен çулĕ мĕн чухлĕ аслăрах, çавăн чухлĕ сыватма çăмăлрах. Çавăнпа та пирĕншĕн пĕчĕк ачасене чахоткă чирĕнчен хăтарасси питĕ пысăк ĕç пулса тăраť.

Ача амăшĕ йе çемйере урăх çын чахоткăпа чирленĕ пулсан, ачана чахоткăран мĕнле майпа сыхламала-ха?

1. Чирлĕ амăшĕн час-часах тухтăрсем патне кайса, хăйĕн сывлăхне тата ача сывлăхне сăнаттармала.

2. Ачана пăхса ÿстерме чух амăшĕн тасалăха питĕ хытă тытса пурăнмала.

3. Тухтăр ачана амăшĕн сĕчĕпе тăрантарса усрама чарман пулсан амăшĕн кăкăрĕсене, аллисене кашни тăрантармассеренех çăвас пулаť йе сывлăшпа, ÿсĕрнипе чир йересрен хăйĕн тути сăмсисем çине марльăле витĕнтерес пулаť.

4. Ачана ашшĕнчен йе амăшĕнчен уйрăм вырăн çинче çывратас пулаť (уйрăм пÿлĕмре пулсан татах аванрах).

5. Ашшĕ-амăшĕсен тата ытти çынсен те ачана чуп тума йурамасť.

6. Ачана тăрантармалли кашăк-тирĕк уйрăм пулмала, вĕсене пур чухне те вĕретнĕ шывпа çуса тасатмала, таса çĕрте усрамала.

7. Час-часах ачана усă сывлăшра илсе çÿремеле, ача пÿлĕмĕнче таса сывлăш тата çутă пулмала.

8. Çулахи вăхăтра ача валли усă сывлăшра çывăрса тăмалли вырăн пулмала. Кăнтăрлахи вăхăтра иртен пуçласа каçчченех, урамра çÿресен питĕ аван.

9. Ача ÿт-пĕвне таса усрамала, час-часах хăйăр çинче выльаттарсан аван пулĕччĕ.

Чахоткăпа чирлĕ ачана та, лайăх пăхсан, чипер ÿстерме пулаť. Чахоткăпа чирленĕ ача малтачах ытти ачасем хушшинче нимрен те паллă мар, вăл сывă ачасемпе танлаштарсан кăштах имшертерех те шуралчкарах, апата сахал çийет, начартарах ÿсет, хутран-ситрен тинĕ ÿслĕкпе ÿсĕрет. Чире вăйланнăçем хăвăртрах ÿсĕрме пуçлаť, йунлă сураť, вăрĕ хытă ыратнипе аптăраť. Кун пек йавăр чирлесе кайнă ачасем санаторисенче çеç сывалма пултараççĕ. Пирĕн Чăваш республикинче ун пек санаторисем Вăрнарта тата Каршлăхра пур.

Чахоткăна çĕнтерес тесен, пуринчен малтан тасалăхшăн тăрăшмала, ачасем хушшинче çак чире тĕп тумала.

Çулахи вăхăтра хĕвеле, шывпа, таса сывлăшпа усă курассинĕ мĕн май килнĕ таран вăйлатмала. Ачасене ирĕкре çÿреме чарас пулмасť. Вĕсен сывлăхне сыхлас ĕçе хутшăнмах вăйла са пырсан çеç коммунисмлă обшчествăна тивĕçлĕ паттăр йру çитĕнтерме пулаť.

Врач Стольаров.

ШКУЛ АЧИСЕМПЕ АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!

УСĂ КУРНĂ УЧЕБНИКСЕНЕ СУТĂР

Усă курнă учебниксене КОГИЗ-ăн Чăваш республикинчи уйрăмĕн пур кĕнеке магазинĕсем те сутăн илеççĕ тата сутаççĕ.

4—4

Канашри „1-ое мая“ промартеле

СТОЛЬАРСЕМ КИРЛĔ

Условисем пирки правленирен илас мала.

Правлени.

3—1

Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан çĕнĕ çĕлекен ертеле

КВАЛИФИКАЦИЛĔ ÇĔВĔÇСЕМ

(хĕрарăм тата арçын тумтирĕсене çĕлеме)

ТАТА

СЧЕТОВОДСЕМ КИРЛĔ

Адрĕс: г. Чебоксары, Коммунальная бена, вход со двора.

Правлени.

3—1

Шупашкарти Государствă кирпĕч савăтне йалан ĕçлеме

БУХГАЛТĔР тата ПЛАНОВИК

кирлĕ

Хватер пур. Çак адрĕспа пымалла: г. Чебоксары, Государственный кирпичный завод, глав. бухгалтеру.

2—1

Уполномоченнăй Чувашглавлита № 436.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 883.